26-36

ИКТĂР КӲКО

# 93-мĕш ҫул

22

РОМАН

ҪĂВАШ РЕСПУПЛĔКĔНҪИ КĔНЕКЕ КĂЛАРАКАН УЙРĂМ

Шупашкар—1926

И (франц)

Виктăр Кўко

# 93-мĕш ҫул

Роман

---

Вырăсла кĕскетсе ҫапнинђен
**Ф. Фоминапа С. Фомин (Ђĕкеç)**
куҫарнă.

Книжная палата Чувашской АССР Чебоксары

ЂĂВАШ РЕСПУПЛĔКĔНЂИ КĔНЕКЕ КĂЛАРАКАН УЙРĂМ
ШУПАШКАР—1926

Типография
„Чувашская книга“
Чебоксары,
Б.-Советская 6.

Чувашлит № 1090 Напеч. 3000 экзем.

# Умĕнхи сăмах.

Виктăр Кӳко, хрантсуссен ҫаплă писсаттĕлĕ, писсаттĕл анҫах пулман, Хрантсин политтĕк ĕҫĕнҫе те активлă, тăрăшса ĕҫленĕ, револютсишĕн хытă ҫуннă. 1871-мĕш ҫулта, Париш Коммунĕ вăхăтĕнҫе, Кӳко Париш хулинҫе пулнă. Париш Коммунне ҫĕмĕрсе тăксан, Виктăр Кӳкон „Тăхăрвун виҫҫĕмĕш ҫул“ йатлă романĕ ҫапăнса тухнă (1874-мĕш ҫулта). Ҫав романра ĕлĕкхи, Париш Коммунĕ пулаҫҫенхи ĕҫсем ҫинҫен ҫырнă. Унта Кӳко хăй те „кăваккисем“, револютсионерсем майлă пулни пит палăрать.

„Тăхăрвун виҫҫĕмĕш ҫул“ йатлă романа Кӳко ҫитмĕл ҫулхи старик ҫух ҫырнă. Вăл унăн йулашки романĕ пулнă. Кӳко 1885-мĕш ҫулта вилнĕ. Сакăрвун виҫĕ ҫул пурăннă.

Кӳкон „Тăхăрвун виҫҫĕмĕш ҫул“ йатлă романĕ хрантсуссен аслă револютсийĕ ҫинҫен каласа парать. Анҫах револютси вăхăтĕнҫе пулнă ĕҫсеве ҫак романра пит тĕрĕс каласа кăтартман.

Виктăр Кӳко—истори ҫыракан ҫын мар, вăл—хутошнĕк. Уншăн ҫи кирли—револютси вăхăтĕнҫе пулнă ĕҫсем мар. Уншăн пулсан—итейĕ, тĕл шухăшĕ анҫах кирлĕ. Ланттенак, Ҫимуртен, Ковен—вĕсем пурте шухăшласа кăларнă геройсем анҫах. Вантейăра (Хрантсин хĕвеланăҫ йенҫи провинтсийĕнҫе) восстани пулни—вăл шухăшласа кăларнă йапала мар. Вăл ҫăнах пулнă.

Ҫав восстани ҫинҫен ҫырса Виктăр Кӳко револютси итейĕпе монарххи итейĕ йепле кĕрешнине кăтартнă. Ҫимуртен револютсишĕн тăрать, Лангтенак—монарххишĕн. Ҫимуртен Ланттенакпа кĕрешни револютси монарххипе кĕрешнине пĕлтерет.

1793-мĕш ҫулта хрантсуссен аслă револютсийĕ ҫийеле тухса ҫитнĕ. Ҫав ҫул Хрантсири револютси совеҫĕ—Конвент пулни иккĕмĕш ҫула кайнă. Ҫав ҫул Хрантсин короҫне, XVI-мĕш Љутовике вĕлернĕ. Ун ывăлне тĕрмене хупса лартнă. Конвентра (револютси совеҫĕнҫе) тĕрлĕ парттисем пĕрпĕриипе пит хытă тавлашнă. Ропеспйер, Танттон, Марат парттийĕсем ыттисеве ҫĕнтерсе пынă.

Ҫав вăхăтрах револютси пĕтĕм Европăпа, тата Хрантсири восстанипе кĕрешнĕ. Восстани тăваканĕсем Хрантсири револютсине хирĕҫ тăракан патшалăхсемпе пĕр канашлă пулса вăрҫнă, револютси тăвакансене пĕтересшĕн пулнă. Кӳко романĕнҫе револютси пуҫлăхĕсене (Ропеспйере, Танттона, Марата) кăшт ҫеҫ кăтартса панă. Вĕсем пĕр-пĕрипе тавлашса ларнине кăтартнă. Ҫав тавлашуран вĕсем пĕтесси курăнать. 1794-мĕш ҫулта Ропеспйер Танттона килйоттинă (пуҫ татмалли машшин) ҫинҫе вĕлерттернĕ. Ҫав ҫултах, иӳлĕн 27-мĕш ҫислинҫе Ропеспйере хăйне те вĕлерттернĕ. Маратне 1793-мĕш ҫултах хĕрарăм контр-револютсионер Шарлоттă Корте вĕлернĕ. Анҫах Кӳкошăн револютси шухăшне Ропеспйер, Танттон, Маратсем кăтартмаҫҫĕ. Револютси шухăшне пит лайăх кăтартаканĕсем—Ҫимуртенпе Ковен йатлă геройсем пулаҫҫĕ.

I.

## „Клеймор“ йатлӑ карап.

Прийор тӗпутат,—Хрантси ҫыранӗ хӗрринҫе, Преттанире, Шерпурк хули патӗнҫе тӑракан армийе комантировккӑна йанӑскер,—вӑрттӑн акӗнтран ҫакӑн пек ҫыру илнӗ:

«Краштанин тӗпутат... Иуӈӗн 1-мӗш ҫислинҫе, тинӗс тулнӑ сехетре, «Клеймор» йатлӑ карап пытарса лартнӑ тупӑсемпе тинӗсе тухать. Вӑл Хрантси ҫыранне акӑ ҫакӑн пек ҫын антарса хӑвармалла: старик, вӑрӑмскер, ҫӳҫӗ кӑвак, аллисем улпутӑнни пек, хресҫенле тумланнӑ. Ытти ҫинҫен тӗплӗн ыран пӗлтерӗп. Вӑл иккӗмӗш ҫислара ирпе анса йулать. Пирӗн ескатрӑна пӗлтерӗр, карапне тытӑр. Вӑл ҫынна килйоттинӑ ҫинҫе вӗлерме хушӑр», тесе ҫырнӑ.

Ҫӑнах та, 1793-мӗш ҫулта иуӈӗн 1-мӗшӗнҫе, тинӗс тулнӑ сехетре, Тшерҫей утравӗнҫи Понӈуи пухтинҫен тинӗселле карап тухнӑ. Вӑл тавар турттаракан карап йевӗрлӗ пулнӑ, анҫах вӑта ҫӗрти палупӗ ҫинҫе, тавар вырӑнне, виҫӗ хут сӑнҫӑрпа вунвиҫ пысӑк тупӑ кӑкарса лартнӑ. Карапӗ Анклин пулнӑ, анҫах ухвитсерӗсемпе матросӗсем пӗтӗмпех хрантсуссем, Хрантсирен тарнӑскерсем пулнӑ.

Камантушҫин приккасӗпе, «Клеймор» карапа пӗр пысӑк, вӑраха йама йураман ӗҫ тума хушнӑ. Самай ишсе кайас умӗн карап пӗр пассашир лартнӑ. Вӑрттӑн акӗнт ҫавӑн ҫинҫен: Вӑл револӈутси тӑшманӗ, тесе револӈутси ҫарне ҫырса йанӑ. Вӑл пассашире карапсен камантушҫипе Тшерҫей утравӗ кӗпӗрнаттӑрӗ хӑйсем ӑсатса лартса йанӑ.

Лотсман карапа хайуллан илсе пына. Теттемпе тетрешен хепертене. Теттем, тетре, тата çула май çил,—пурте карапа пулашна. Тул çуталаспа карап Хрантси çыранесем патне çитет те, король власне тепер хут тавакан çынна çыран херрине антарса хаварат.

Лотсмане те, ыттисем те королшен пит хыта тана.

Йатне петем камантипе иккен анчах—капитанпа помошнеке çеç пелекен пассашир, суллантарнине сисмен пек, тинес çинче çуреме веренне çынла палупа тарах хыттан утса çурене. Çил ун пуçе çинчен сарлака шлепине вестерсе антарма хатланна, хыта пиртен туна плашчине вестерне, старикен çуле пуне перре плашчапа хуплана, тепре плашчине сирсе парахна. Вара плашча айенчен Преттанири хресчен тумтире: сарлака йем, çулте саралса таракан кунчалла ата, тата качака çаманчен туна куртка куранкаласа илне.

«Клеймор» каманти пассашире «Мушик» тесе йат пана. Анчах, ун çинчен ним те пелмесен те, матроссем çав «Мушик» мушик маррине пит лайах пелне.

Çил уççан верме тытанна, хум тухса кайна. Çер ахалчинчен теттем пулна. Çамар пелетесем петем çанталака хупласа илсе уйаха пытарса лартна. Тинес çинче палармн тетре тана. Хумсем вайла пулна, анчах тавалах пуçланман-ха.

Варам пассашир тинес хайарран шавланине итлесе, куртки касийинчен шакколат татаке каларна та, пер катак катса илсе çаварне чикне; çуçе кавак пулсан та, старикен шале пурте пулна.

Вал шакколат çисе керленине итлене,—тинес керленине мар, Хрантси керленине, револутси керленине итлене. Револутси çав çул херринчи парттисен

пуҫлăхĕсене – Ропеспйерпе Танттона влаҫ панă, Марата ҫапа кăларнă. Ҫав ҫул револютси ҫийеле тухасси хăратса тăнă.

Тинĕс кĕрленипе ҫил шăхăрнă хушăра старик ҫун хавалĕпе кăшкăрса йанă сасă илтнĕ, тата кăпитанпа помошнĕкĕ вăта ҫĕрти палупăна анмалли хăма патне ҫупса кайнине, унтан, ним тума пĕлмен пек, йĕр-тавра пăхкаласа кайалла шартах сикнине курнă. Тупă тавращĕнҫи ҫынсем пурте хăраса ҫӳлелле хăпарнă, васканипе пĕрпĕрне ҫыпнă. Темĕскер, тăвăлран та усалтарахххи пулнă пулас.

Старик шăкколат ҫăмласа, анмалли хăма патнелле утса пынă, кăпитана айаккалла тĕртсе тăратнă та, курах йанă: пĕр тупă сăнҫăртан вĕҫерĕнсе кайнă. Вун пин кĕрөнкке туртакан тупă аҫасем выҫамалли ҫăмха пекех сиккеленĕ. Вăл йе пĕр вырăнта ҫавăрăнса тăнă, йе карап ҫалăшнă йеннелле шуса кайса, карап ҫтенисем ҫумне ҫапăннă. Ҫтенисене шăтарса пăрахасран хăрамалла пулнă. Тупă урса кайнă: малалла ҫупăн, кайалла ҫакнă, мĕн тĕл пулнă, ун ҫумне пырса ҫапăннă, хăйĕн ҫулĕ ҫинҫе тĕл пулкалаканне пурне те ҫĕмĕрнĕ.

Вăл пилĕк арттилерисе ĕнтĕ лапҫатса пăрахнă, йунашар тупне вырăнтан тапратнă.

Ҫапла пулнăшăн тупă пăхакан пĕр салтакĕ айăплă пулнă. Вăл сăнҫăрăн кайккине лайăх хытарса лартман, тата тупă тăркăсĕсене (кускăҫĕсене) ҫаракламан мĕн, ҫавăнпа тупă пуҫелĕкĕ рамкă ăшĕнҫе шуса тăрса ик айккинҫен хăмине те пушатса пăрахнă, унтан тупă шăлгăрми те вырăнтан сиксе тухнă. Ҫитменнине тата канаҫĕ татăлса кайнă, ҫавăнпа тупă хăй вырăнҫе ҫирĕп лартман. Пысăк хум карап айккине пырса ҫапăннă. Лайăх кăкарса лартман тупă вырăнтан куҫса кайса сăнҫăрне татса пăрахнă та, карап урайĕнҫе ҫупса ҫӳре пуҫланă.

Вăрăм пассашир пысăк тупă кĕмсĕртеттерсе çӳрекен палупă çине аннă. Тупă хăй вĕлернĕ сынсен ӳҫĕсене пĕтĕмпех тураса тăкнă, матроссем çӳлтен пăрахакан йапаласене: тӳшексене, койккăсене, саппас паруссене, канат ҫăркисене, матроссен кĕпе-йĕм хунă măйĕхĕсене пурне те туранҫăк тунă.—Çав йапаласене пăрахса урса кайнă туппа ҫарма пулаť пулĕ, тесе шухăшланă матроссем.

Старик-пассашир тупă хăй йĕри-тавра пит хăрушăн çавăрăнса çӳренине вырăнтан тапранмасăр пăхса тăнă.

Хăй пирки инкек пулнă арттилерис те, хулăм тимĕр патак тытса айала аннă. Вăл пĕр кĕтесре урисене ҫарса тĕреклĕн пусса, çурăмĕпе çтена çумне тайăнса, тупă хăй çумĕпе иртсе кайасса кĕтсе тăнă. Анҫах тупă инçетри кĕтесре çавăрăнса çӳренĕ.

Хăрлатакан йыттине хуçи пушăпа хĕртсе лăплантарас тесе йăхăрнă пек, арттилерис тупа: кунталла... кунталла..,—тесе йăхăрнă.

Тупă вăрт ҫарăннă та, сасартăк арттилерис патнелле тапранса пынă. Леш айаккалла тапса сикнĕ. Тĕттĕм çĕрте тупăпа çын кĕреше пуçланă. Çӳлтен вĕсем кĕрешнине карап каманти пăхса тăнă.

Старик-пассашир тупăпа çын кĕрешнине пит асăрхаса пăхса тăнă. Унăн та арттилерис пекех хăрамалла пулнă. Акă тупă арттилерис çинелле сиккипе вĕçтерсе пынă. Лешĕ айаккалла тапса сикнĕ. Тупă каллех ун патнелле ҫупса кайнă. Вăл каллех тапса сикнĕ. Тупă ҫĕрĕ пек, куçлă пек, касма сулса йана пуртă йĕвĕрлех, çын патнелле кутăн пит хытă ҫупса кайнă. Карап айккипе пусма хушшине пăҫăртса лартнă арттилерисĕн вилмеллех пулнă.

Анҫах старик—пассаширĕ тупă урлă пит хăвăрт ҫупса кайнă. Хăй лапҫăнса кайасран та хăрамасăр,

çул çинҫе вӑл укçа ҫӑрки йарса илсе ӑна тӳрех тупӑ тӑркӑсӑсем айне пенӗ. Тупӑ такӑнса кайнӑ пек пулнӑ. Вара арттилерис хӑйӗн тимӗр патакне хӑвӑртрах кайри çывӑхрах тӑркӑс шӑлӗсем хушшине ҫиксе лартнӑ. Туппа çӗннӗ.

— Хӑспотин, есӗр мана çӑлтӑр, тенӗ арттилерис.

Вӑрӑм пассаширӗ хирӗç ним те ҫӗнмен.

Туппа çӗннӗ, анҫах карап пит аманнӑ. Тӑшман сисессине те манмалла пулнӑ. Карап айккисене ӑçта кирлӗ унта хунарсем çакса палупӑна çутатмалла пулнӑ.

Туппа çӗннӗ, анҫах карап хӑй çулӗнҫен сулӑнса кӑнтӑр йеннерех кайса йанӑ.

Туппа çӗннӗ, анҫах çил карапа выҫаса-хумханса тӑракан тинӗс тӑрӑх хӑваласа çӳренӗ. Пысӑк хумсем аманнӑ карапа çуланӑ. Тинӗс çинҫе тӑвӑл вӑйланса пынӑ.

Анҫах çапах та туппа çӗннӗ, çӗнекен çынне накратӑ памалла пулнӑ.

Кӑпитан старик умне арттилерисе илсе пынӑ. Арттилерисӗн тумтирӗ çӗтӗк пулнӑ, çӳçӗ арпашса пӗтнӗ, куçӗсем çунса тӑнӑ.

— Кенерал,—тенӗ кӑпитан,—акӑ карапа çӑлнӑ çын. Сирӗн шухӑшпа ӑна накратӑ пама кирлӗ мар-и? тенӗ.

— Ирӗк сирӗрте, манта мар. Есӗр кӑпитанӗ, тенӗ старик.

— Анҫах есӗр кенерал.

Старик арттилерис йеннелле пӑхнӑ.

— Кил кунта, тенӗ.

Арттилерис ун патнелле ура йарса пуснӑ.

Старик кӑпитанӑн кӑкӑрӗнҫи çветтуй Лҫутовик ортӗнне вӗçертсе илнӗ те, арттилерис куртки çумне çыпӑçтарнӑ.

— Ура! тесе кăшкăрса йанă матросĕсем.

Кăпитан „кенерал“ тесе ђĕннĕ çын. хĕпĕртеннипе ним тума пĕлмен арттилерис çине пўрнипе кăтартнă та:

— Хађ ăна персе вĕлерĕр! тенĕ.

Морексен хĕпĕртесе кăшкăрнă сасси çавăнтах ђарăнса ларнă, пĕр пĕлĕтпе тинĕсе çуракан тăвăл кĕрлени анђах уççăн илтĕннĕ.

— Çав çын ĕçе лайăх туманни карапа ђутах пĕтерсе лартмарĕ, тенĕ кенерал.—Тăвăл карапа пĕтермешкĕн сыхласа тăраť. Тăвăл пире сыхласа тăраť. Тăшман çывăхра ђух кашни йăнăшшăнах вĕлермелле. Паттăрлăхшăн накратă памалла, ĕçе лайăх тумавшăн хытă айăпламалла.

Старик татах каланă:

— Персе вĕлерĕр! тенĕ.

Çĕтĕк куртки çине çветтуй Ђутовик хĕресне çакнă арттилерис пуçне усса йанă.

Икĕ матрос айала аннă та, савăн [1]) илсе таврăннă. Çершант [2]) вуникĕ салтак уйăрса илнĕ те, вĕсене икĕ рет тăратса тухнă, кашнинђе ултшар çын.

Вĕлермелле тунă салтакĕ ним ђĕнмесĕр вĕсем хушшине пырса тăнă. Пађăшки хĕрес тытса малалла утса тухнă та, ун патне пынă.

— Марш! тенĕ çершант.

Свот карап сăмси патнелле утса кайнă. Савăн тытнă матроссем хыçалтан пынă. Çутă йăлтăртатса илнĕ, пăшал сассисем ахлатнă та, арттилерис тивĕселле анса ўкнĕ.

Пассашир арттилерисе персе вĕлернине çаварăнса та пăхман.

— Вăл ђăн-ђăн кенерал çав, тенĕ кăпитан помошнĕкĕ.

---

1) Вилнĕ çынсене пўркемелли.

2) Унтĕр-ухвитсер.

— Вăл лайăх.

— Çынна ним те хĕрхенмест, тенĕ кăпитанĕ. Помошнĕкĕ ун çинелле пăхнă.

— Кăпитан, есĕр пит тĕрĕс сăмах тупса каларăр. Хĕрхенмест çав. Пире ĕнтĕ лап çав кирлĕ. Пирĕн вăл йурăхсăр çынсене, патшана вĕлерекенсене тăвататă татăк туса тăкмалла. Вĕсем король пуçне татрĕç—пирĕн вĕсене каçармалла мар... Мĕн пур вăйпа пĕтермелле, касмалла, турамалла.

Король майлисем хўтлĕх тупнă карапа, ахаль те вăйсăрланса çитнĕскере, вăл вăхăтра çил-тăвăл пĕтĕм вăйпа пĕтерме хăтланнă.

— Çил хумсем хăпартать, тенĕ лотсмăнĕ. Унăн карап илсе пыма вăйĕ пĕтсе çитнĕ.

Хайаррăн кĕрлекен тинĕс тĕлĕнче çăмăр пĕлĕчĕсем хуп-хура упкăнăн çакăнса тăнă, кăвак шуçăмăн имшер çутти çăмăр пĕлĕчĕсене айаккалла хăваласа пĕлĕте тинĕсрен уйăрса тăнă. Карапа пĕтерме пултаракан шыв çинчи сакăлталла мăн тусене тĕттĕмрен кăларас тесе, хĕвеланăçĕнче уйăх хуп-хура тĕттĕм виттĕр хайĕн йулашки çуттине кăларса йанă.

Хĕвелтухăçĕнче, кăвак шуçăм çутăлса килнĕ тĕлте сакăр карап куранса кайнă—хрантсус карапĕсем.

Хĕвеланăçĕнче тинĕс тĕпне путса вилмелли кĕтнĕ, хĕвелтухăçĕнче—вăрçса вилмелли.

— Икĕ йенче те пĕтмелли, тенĕ те кăпитан помошнĕкĕ, кулса йанă.

— Кĕрешсе пăхăпăр, тенĕ кăпитанĕ.

Лотсмăнпа калаçса илсен, хăй помошнĕкне тата çапла каланă:

— Сакăр карап çинче виççĕр сакăрвунă тупă, тенĕ.—Пирĕн вăрçма йурăхли тăхăр тупă, тенĕ.

Унтан вăл вăрçма хатĕрленме хушнă та, старик пассашир патне кайнă.

— Кенерал, тенĕ вăл,—епĕр карапсемпе шыв айĕнҫи ҫулсем хушшине капкăна лекрĕмĕр. Хумсем ăшĕнҫе вилиҫҫен, ҫапăҫса вилес пĕрех хут. Анҫах вилесси—пирĕн ĕҫ вăл, сирĕн ĕҫ мар. Епĕ сире ҫуҫкă, тата ишмешкĕн ҫын паратăп. Хумсем пысăк, тинĕс ҫинҫе тĕттĕм, есĕр ишсе кайнине никам та сисмĕ, тенĕ.

Старик ун сăмаххипе килĕшнĕ.

Кăпитан ыттисене каланă:

— Ҫак ҫын—короҫ претставиттелĕ. Ăна пирĕн хўтлĕхе панă, пирĕн ăна сыхлас пулаť. Вăл Хрантси патши интересĕсемшĕн кирлĕ. Вăл Вантейĕри трушинăсен пуҫĕ пулмалла. Вăл ҫапăҫма пĕлекен паллă кенерал. Вăл Хрантси ҫыранне пирĕнпе пĕрлех ҫитмеллеҫҫĕ. Мĕн тăвас-ха, халĕ ĕнтĕ пирĕнсĕрех ҫитет. Ун пуҫне ҫăлни—пурне те ҫăлни пулаť. Кам кенерала ҫыран хĕрне ҫитерес тет? тенĕ.

Тĕттĕм регсенҫен пĕр ҫын тухнă та, каланă:

— Епĕ, тенĕ.

Ҫавăнтах карапран пĕҫĕк ким уйăрăлса кайнă.

Кăпитан трупа виттĕр пит хыттăн кăшкăрса йанă:

— Аслă короҫ морекĕсем! Вăта ҫĕрти маҫтă тăррине шурă хлак ҫакса йарăр: епĕр шурăмпуҫа йулашки хут куратпăр, тенĕ.

Карап ҫинҫен тупă персе йанă.

— Сывă пултăр короҫ! тесе кăшкăрнă камантă.

Инҫетри карапсем ҫинҫен тата:

— Респуплĕк сывă пултăр! тесе кăшкăрни хуллен илтĕнсе кайнă.

Виҫҫĕр тупă сасси харăс кĕмсĕртетни тинĕсе кисрентерсе илнĕ.

Пушар ҫутти пĕлĕте ҫутатса йанă. Ҫил хĕрлĕ тĕтĕмĕн мăн ункисемпе выҫанă. Карапсем куҫа курăнакан мĕлкесем пек пĕрре курăннă, тепре каллех

кусран сухална. Вăрçă нумайа пыман. «Клеймор» карап пĕтнĕ.

Вăрçăран инçетри ким çинче, ним çынсăр тинĕс варринче ишекенĕ кĕсменсене (кĕреçисене) пăрахнă та, ларса пыраканне куçран тĕллесе пăхса çапла каланă:

— Есĕр те-Ланттенак маркис, те-Хонтене виконт. Есĕр ман улпут, тенĕ.—Есĕр пирĕн патран тарнă та, хаљ кайалла таврăнаттăр. Хăй те мĕн хушăр—пурне те тăватăп. Пирĕн турăпа короле пăхăнмалла (корољ вăл пирĕншĕн çĕр çинчи турă), унтан хамăр улпута, вăл пирĕншĕн корољпе пĕрех. Епĕ сире тӳрех, есĕр карап çине кĕрсенех палларăм,—епĕ сире ачаранпах астăватăп,—анчах сирĕн йата никама та каламарăм. Епĕ Каљмало йатлă, тенĕ.

Унтан вăл каллех ишме тытăннă.

## II.

## Ланттенак.

Ун чухне пĕтĕм тинĕс хĕрринчи халăх, пĕтĕм Преттани çĕрĕ пăлханса тăнă. Хресченсем революци çарĕсене хирĕç ушкăн-ушкăн пухăнса вăрçнă.

Пăлханакан Вантейĕ çĕрне пусарма йанă çынсене Париш Коммунĕ апрелĕн 28-мĕшĕнче çакăн пек прикас pană: Ниме те ан хĕрхенĕр, никама та ан каçарăр, тенĕ.

Йунĕн иккĕмĕшнелле, Ланттенак маркис Хрантси çĕрне тухнă куналла, Паришрен пынă вуникĕ пин салтакран сакăр пинне пĕтернĕ.

Паришрен хăйсем ирĕкĕпе пынă салтаксен патталйонĕ пĕрре Сотрей вăрманĕнче виç ачаллă хĕрарăма тĕл пулнă. Патталйон пуçлăхĕ çершант Ратуп хĕрарăмран:

— Есĕ кам майлă тăратăн: кăваккисем майлă-и, йе шуррисем майлă? тесе ыйтнă.

Хĕрарăмĕ каланă:

— Епĕ... аҫасем майлă, тенĕ.

— Сан упăшку мĕн тăваҫ? тесе тĕпҫенĕ ҫершант.

— Ăна вĕлернĕ. Вăл короҫ майлă, хăй улпуҫĕпе паҫăшки майлă вăрҫнăҫҫĕ.

— Есĕ ху мĕн тăватăн?

— Аҫасемпе кайатăп.

— Ăҫта кайатăн?

— Ăҫталла куҫ курать, унталла.

— Ăҫта ҫывăратăн?

— Ҫĕр ҫинҫе.

— Мĕн ҫисе пурнатăн?

— Ҫырла ҫийетпĕр — йĕплĕ хулă ҫырли, хура ҫырла, тата упа сарри*) папаккисем ҫийетпĕр.

Икĕ аҫи—арҫын аҫапа хĕраҫа ҫершанта пăхса тăнă. Хĕрарăм кăкăрĕ патĕнҫе алă аҫи выртнă. Хĕрарăмĕ ним вăтанма пĕлмесĕр ҫара кăкăрне кăтартса тăнă. Ун урисенҫе пушмак та, ҫăлха та пулман; урисем йунланса пĕтнĕ.

Ҫершант каланă:

— Пĕлетĕн-и есĕ—епĕр Париш ҫыннисем вĕт, сан упăшку пире хирĕҫ вăрҫнă, тенĕ.

Хĕрарăм аллисене кĕл тунă ҫухнехи пекех тытнă та:

— Ей Исус турă... тесе йăнăпса йанă.

— Суйа ĕнену кирлĕ мар, тенĕ те ҫершант, хĕрарăм кăкăрне ĕмекен аҫа тĕлне пĕшкĕннĕ. Хĕраҫа кăкăра ҫăвартан кăларса йанă та, хуллен пуҫне ҫавăрса ҫершантăн ҫăмлă пиҫĕ ҫинелле пăхса илнĕ.

Ҫершант тŷрленсе тăнă та:

*) Асанне сарри.

— Иулташсем, тенӗ. — Епӗр çаксене тӗл пултӑмӑр, çавӑнпа пирӗн патталйонӑн çак виçӗ аҫана хӑйӗн аллине илсе, вӗсен ашшӗ пулас пулаҭ. Есӗр килӗшеттӗр-и? тенӗ.

— Респуплӗк сывӑ пултӑр! тесе кӑшкӑрса йанӑ салтаксем.

— Çапла пултӑр еппин, тенӗ çершант.

«Хӗрлӗ Çӗлӗк» патталйойнӗн аҫисем вара амӑшӗпе пӗрле çула кайма тухнӑ.

Салтаксем сыхланкаласа малалла утнӑ.

Çӳлте, штик тӑррисем тӗлӗнҫе кайӑксем йурланӑ. Вӑрманта хурама, хурӑн, тата йуман пулнӑ. Вӑрмаҫӗ тӳрем çӗрте ӳссе ларнӑ. Мӑкпа çӑра курӑк çын ури сассине илтӗнтермен. Çул та, сукмак тавраш та пулман. Упа саррисем, çӳлӗ йӗплӗ хулӑ тӗммисем карталанса тӑнипе çын пӗр вунӑ утӑмранах паллӑ пулман. Хӑш ҫух тӗмӗсем хушшинҫе шурта пурнакан кайӑксем курӑнкаланӑ.

* * *

«Хӗрлӗ Çӗлӗк» патталйонӗ, тӑшман пытанса сыхласа ларасран хӑраса вӑрман тӑрӑх малалла хуллен утнӑ ҫух, Калмало те-Ланттенак марккисе тинӗс хӗррине антарнӑ.

Те-Ланттенак марккис матроса каланӑ:

— Есӗ ху матрос пулни çинҫӗн ман. Хресҫен пул, тенӗ.

— Матрос пулаҫҫен малтан епӗ хресҫен пулнӑ, тенӗ Калмало.

— Епӗр уйӑрӑлса кайатпӑр, тенӗ марккис — Есӗ Çент-Опен вӑрманне кайӑн. Унта, вар хӗрринҫе, Çен-Рийелпе Плетелйак хушшинҫе пысӑк йӑвӑç курӑн. «Хамӑрӑн» тесе виçӗ хут кӑшкӑр. Виççӗмӗшӗнҫе çӗр айӗнҫен çын тухӗ.

— Пĕлетĕп. Йăвăç тымарĕсем айĕнђи çĕр айĕнђи çулпа.

Маркких хăйĕн симĕс пурçăн панттине Калђмалона тыттарнă.

— Акă манăн коккартă, тенĕ.—Ил ăна. Манăн йата халĕ вăхăтлăха никама та ан пĕлтер. Çак коккартăна кăтартсанах çитет. Ун çинђи ђеђекне аслă королевă тĕрмере тĕрленĕ, тенĕ.

Калђмало хăрах ђăркуççи çине тăрса тутипе ылтăн ђеђеке сĕртĕнсе илнĕ.

— Çак коккартăна вар патĕнђи çынна кăтартатăн, тенĕ марккис.—Вăл тăнласа илĕ. Çав çын Планшекко йатлă, урăхла ăна «Королђ ђĕри» тесе те ђĕнеççĕ,

Калђмало лайăх итленĕ. Хăй курмалли çын йађĕсене те, марккис кайма хушнă çĕр-шыв йађĕсене те лайăк хăлхана ђикнĕ. Марккис хăйĕн Ла-Турк йатлă самăкне асăнсан çеç, вăл марккисе пўлсе сăмах хушнă.

— Унта çĕр айĕнђен кайакан çул пур, тенĕ.—Атте ăна пĕлетђĕ те, мана кăтартрĕ. Çав çула авал, Ла-Турка ђас-ђасах тăшмансем хупăрланă вăхăтра туса хăварнă. Хупăрланă çынĕсем кирек хăçан та çав çулпа самăкран тухса кайма пултарнă, мĕншĕн тесен, вăл çул вăрманалла пырса тухать.

— Епĕ вăл çула пĕлместĕп, тенĕ марккис.

— Вăл пур, хăспотин, тенĕ Калђмало.—Пур. Епĕ лайăх пĕлетĕп. Çтена ђулне анђах çавăрмалла...

Марккис ăна каласа пĕтерме памап.

— Вăхăт иртерес мар. Ђи малтан ĕçне тумалла, тенĕ вăл.

Унтан тата çапла каланă:

— Королевăн ђеђекне кăтартсан сана пур çĕрте те лайăх пăхĕç. Санăн мушиксемпе ту çинђи халăх анђах пурнакан вырăнсемпе çўремелле пулать, çавна ан

ман. Санăн урăхла тумланмалла. Респуплĕкшĕн тăракансем вĕсем пит ухмах,—кăвак камсолпа [1]) виç тĕслĕ кокартăллă шлеп тăхăнсан, пур çĕре те каймa пулаť. Халђ полккăсем те, салтак хормисем те çук вĕт. Епĕ асăннă çынсене пурне те кала. Харăс икĕ вăрçă тума—пысăккине те, пĕђĕккине те пуçлама вăхăт çитрĕ, тесе кала. Епĕ вăрмансенђе вăрçнине уçă уйра вăрçнинђен маларах хуратăп. Çак уйăх пĕтнĕ çĕре ман пилĕк çĕр пин салтак вăрмансенђе пытанса тăма кирлĕ. Респуплĕкшĕн тăракансен çарĕ епĕ тытмалли кайăк пулаť. Епĕр вăрттăн пытанса вăрçăпăр. «Никама та хĕрхенмелле мар», «пур çĕрте те пытанса сыхласа лармалла»,—епĕ çавăн пек вăрçасшăн. Акăлђансем пирĕншĕн тăраççĕ. Европпă пире пулăшаť. Револђутсине пĕтерес пулаť. Çаксене пурне те каласа пар.

— Анђах епĕ сире ăçта курăп-ха, хăспотин?

— Акă пĕр ерне те иртмĕ—ман çинђен калаçа пуçлĕç. Епĕ хам пуррине ĕçсемпе кăтартăп. Епĕ королђпе тĕншĕн таврăтăп. Кайах.

Колђмалона йарсассăн, те-Ланттенак маркkис пĕђђенех тăрса йулнă. Йĕри-тавра пăхмашкăн вăл çўлĕ хăйăр ту çине хăпарса тăнă. Ту çинђе ђултан тунă çухрăм йупи ларнă. Марккис йупа çумне тĕршĕнсе инçетелле, тĕттĕмелле пăхнĕ. Акă, йулашкинђен, вăл мĕн шырани тупăнђĕ: карта тытса çавăрнă çуртсемпе йăвăççем—хермă курăнса карĕ.

Тўремре тĕттĕмленнĕ, вăрманĕнђе каç пулсах çитнĕ. Пĕлĕт çинђе çăлтăрсем тухнă. Тинĕсрен çил вĕрнĕ. Çĕр çинђе шăп пулнă. Пĕр çил варкăшни анђах илтĕннĕ.

Те-Ланттенак марккис ним те тапранман. Вăл пĕђђенех пулнă. Никам та пĕлмен ăна, никам шухăшламан ун çинђен. Сасартăк вăл тўрем пĕтнĕ çĕрте,

[1]) Шилет йеврĕлĕ авалхи тўмтир.

инçетри ђиркӳ тăррипђе акă мĕн курса йанă: ђан ђӳређи пĕрре тĕттĕмленсе илнĕ, тепре çуттăн курăннă; пĕрре ђӳређи виттĕр пĕлĕт курăннă, тепре мĕлке ӳкнĕ. Мĕлки те, çутти те мăлатук сунтала çапнă пекех улшăнса тăнă.

Çӳлĕ хăйăр ту çинђен вунпĕр йал курăннă.

Те-Ланттенак марккис пур ђиркӳ тăррисене те пăхса илнĕ: пурин те ђан ђӳређисем пĕрре тĕттĕмленнĕ, пĕрре çуттăн курăннă. Ланттенак марккис ђухласа илнĕ: пур ђиркӳсенђе те пушар ђухнехи пек ђан çапаççĕ курăнат.

Çил тинĕс йенђен вĕрнĕ те, ђан сассине айаккалла илсе кайнă. Те-Ланттенак марккис ђан сассине илтмен. Вăл çапнине курнă.

— Ђăнах-им? тенĕ марккис.—Анђах епĕ кунтине никам та пĕлмест-çке.

Вăл кăштăрт-каштăрт тунисене пурне те итленĕ. Çавăнтах вăл тата вунă хут хытăрах асăрханма пуçланă. Пĕр ик-виç минут хушши ĕнтĕ çӳлте, ун пуçĕ тĕлĕнђе, çулçă кăштăртатнă пек сасă илтĕннĕ. Вăл çавăнса пăхнă та, хут татăккине курах кайнă: çухрăм йупи çумне çыпăçтарнă хута çил вĕлкĕштернĕ.

Пĕлĕт тăп-тăрă. Айалта ту вĕçĕнђе тĕттĕм пулнă, çӳлте çутăрах пулнă. Шултăра саспаллисемпе хут çине çапла çырса хунă:

Хрантсуссен уйăралми пĕр респуплĕкĕ.

Епĕр, тинĕс хĕрринђе, Шерпуркра тăракан çар çумĕнђи халăх уполномођăннийĕ, Марнăн прийорĕ, çак хутпа çапла хушатпăр: Елĕкхи те-Ланттенак марккиса, викконт Хонтене, хăйне хăй Преттани принтсĕ тийекенсере, Хрантси çыранĕ çине Кранвил патĕнђе вăрттăн аннăскере саккун тулашĕнђе шутламалла. Ун пуçне хак хунă. Кам та кам ăна власене йе ђĕрĕп, йе

вилӗн тытса парат̆, ҫавна утмӑл пин ливр [1]) укҫа параҫҫӗ. Хут укҫа мар, ылтӑн параҫҫӗ. Хаљ асӑннӑ те-Ланттенак маркиса шырама халех пӗр патталљйон тухса кайат̆.

Йалти опђӑсене ҫара пулӑшма ђӗнетпӗр.

1793-мӗш ҫулта иуӗн 2-мӗшӗнђе Кранвилте ҫырнӑ.

«Марнӑ прийорӗ» тесе алӑ пуснӑ.

Унтан айалта тата вӗт пуквӑпа ҫапла ҫырнӑ.

«Те-Ланттенак маркиса палласа илсенех, ӑна персе вӗлереҫҫӗ». «Ковен» тесе алӑ пуснӑ.

— Ковен... тенӗ ђӑтаймасӑр маркис.

Вӑл пит хытӑ шухӑша кайнӑ та, нумайђђен куҫне ҫут ҫинђен илмесӗр пӑхса тӑнӑ.

— Ковен.. тенӗ вӑл каллех.

Унтан, шлепне куҫӗсем ҫинелле антарса, тинӗс ҫинђе ҫӳремелли плашђин пашликне йанаххи айӗнђенех тӳмеленӗ те, хӑйӑр ту ҫинђен васкаса утса аннӑ. Вӑл малтанах тӗлленӗ ҫулпа хермӑналла уттарнӑ. Унта вӑл хӑрамалла мар хӳтлӗх тупма шутланӑ.

Вӑл йӗплӗ хулӑ пусса илӗ ҫулӗ те, ђӑнкӑ сӑрт ҫумӗне иртсе пынӑ. Акӑ ӗнтӗ хермӑ та инҫе мар.

Сасартӑк шутсӑр пысӑк тӗтӗм йупи ҫӳлелле йавӑнса хӑпарса кайнӑ. Ӑна шупка вут ђӗлхисем ҫуласа тӑнӑ. Хермӑ йенђе пӑшал пенисем, кӑшкӑрнӑ сасӑсем илтӗнсе кайнӑ.

Мӗн пулнине пӗлес тесе, маркис хӑрассине те пӑрахса, сӑрт тӑррине хӑпарса тӑнӑ.

Ђӑнах та. Хермӑ патӗнђе пӑшалсем переҫҫӗ. Хермӑ ҫунат̆. Ҫавӑнтах тата пӑшал сассисем илтӗнми пулђӗҫ.

Маркис сӑртран анма тӑрат̆, анђах вӑл ӗлкӗреймен. Хермӑна ҫӗмӗрсе тӑкаканӗсем ђӑтлӑхӗпех саланса

[1]) Хрантсуссен авалхи 75 пус..ӑх кӗмӗл укҫи.

кайнӑ. Таврари тӗмсем хушшинҫе вӗсен сассисем илтӗннӗ. Ҫас-ҫасах хытӑран хытӑ пӗр йат ӑсӑна-асӑна кӑшкӑрнӑ:

— Ланттенак... Ланттенак.. Те-Ланттенак маркис, тенӗ.

Маркиса курнӑ пулас. Маркис пӗтрӗ ӗккен.

Ун таври пӗтӗм ҫӑтлӑхӗпех штиксем, пӑшал кӗпҫисем, шашкӑсем йӑлтӑртатса карӗҫ. Маркис патӗнҫех «Ланттенак» тени илтӗнҫӗ те, айалта, ун урисем патӗнҫе, йӗплӗ хулӑ тӗммисем хушшинҫе, хайар ҫынсем курӑнса карӗҫ.

Маркис пӗҫҫенех пулнӑ. Вӑл ҫӳлӗ вырӑнта пур йеннелле курӑнса тӑнӑ. Вӑл шлепке хывса хӑрах хӗррине хӑпартнӑ. Йӗплӗ хулӑ тӗмӗнҫен пӗр вӑрӑм типӗ йӗп хуҫса илнӗ. Кӑсйинҫен шурӑ коккартине туртса кӑларнӑ. Йӗплӗ хулӑ йӗппипе ӑна шлеп ҫумне тирсе лартнӑ та, пуҫне тӑхӑннӑ. Унтан пӗтӗм вӑрман йеннелле пӑхса хытӑ сасӑпа каланӑ:

— Есӗр шыраканни—епӗ вӑл. Епӗ—те-Ланттенак маркис, те-Хонтене викконт, Преттанири принтс, короҫ ҫарӗсен кенерал-лейттенанҫӗ. Перӗр... Пли! тенӗ.

Икӗ аллипе те вӑл сӑран куртки аркисене сарса йарса кӑкрине ҫап-ҫара тунӑ.

Хайне пӑшал кӗпҫисем тӗллеҫҫӗ пулӗ тесе, вӑл ҫӗрелле пӑхнӑ та, хӑй йӗри-тавра ҫынсем ҫӑркуҫҫи ҫинҫе тӑнине курах кайнӑ. Вӑрман тӑрӑх темиҫе пин ҫын сасси йанӑрса кайнӑ:

— Ланттенак кенерал, пирӗн хӑспотин сывӑ пултӑр! тенӗ.

Сывлӑпалла шлепсем вӗҫсе хӑпарнӑ.

Илемлӗ ҫамрӑк ҫын сӑрт ҫине ҫупса ухнӑ та, шлепне ҫӗре пӑрахнӑ. Урлӑ ҫыхнипе шапкине вӗҫертнӗ, хӑрах ури ҫине ҫӑркуҫланса урлӑ ҫыхнипе шашкине маркиса тыттарнӑ та, каланӑ:

— Ака аслă камантушҫин шашки. Ҫак ҫынсем сирĕн пулаҫҫĕ. Приккас парăр, кенерал, тенĕ.

Вăл аллипе сулнă та, тĕмсем хушшинҫен пĕр ик-виҫ ҫын виҫĕ тĕслĕ йалав тытса тухнă. Йалавне вĕсем марккис ури патне хунă.

— Кенерал, тенĕ ҫамрăк ҫынĕ,—ҫак йалава епĕр хермăна йышăнса илнĕ «кăваккисенҫен» туртса илтĕмĕр. Ҫав хермăра епир сире тупмаллаҫҫĕ, тенĕ.

Марккис пĕр хыпаланмасăр, хуллен хăй ҫине шашкă ҫакса йанă. Унтан шашкине йĕнинҫен туртса кăларнă та, пуҫ тĕлĕнҫе сулса:

— Тăрăр!.. Короҫ сывă пултăр! тесе кăшкăрса йанă.

* *
*

Ҫав вăхăтра хермă ҫĕмрĕкĕсем хушшинҫе «Хĕрлĕ Ҫĕлĕк» патталйонĕнҫи салтак виллисем выртнă. Пурте ҫара уран пулнă: аттисене хывса илнĕ. Пăшалĕсене те туртса илнĕ.

Виллисем йунашар выртнă... Вĕсене п е р с е вĕлернĕ.

Тăпра ҫинҫе пысăк лупашка йăсăрланса тăнă. Вăл йун лупашки пулнă.

Вутран йулнă лутра ҫтена хыҫĕнҫен урасем курăнса тăнă. Вăл урасем ыттисенҫен пуринҫен те пĕҫĕккĕ пулнă. Вĕсем хĕрарăм урисем. Ҫавăнпа та вĕсем ҫара пулман: кама кирлĕ-ха вăрҫăра хĕрарăм пушмакĕсем?

Хĕрарăмĕ ҫтена хыҫĕнҫе хускалмасăр выртнă. Пиҫĕ унăн вилнĕ ҫынăвни пек шурса кайнă, ҫăварĕ уҫах, куҫĕсем хупăннă. Кăкăрĕ ҫара пулнă. Хулпуҫҫи ҫинҫе йун хытса ларнă. Хулпуҫҫи шăммийĕ хуҫăлнă. Вăл хĕрарăма та персе вĕлернĕ.

Ҫĕмрĕксем хушшинҫен, пĕр шăтăкран етем пуҫĕ сиксе тухнă, ун хыҫҫăн тепри. Ку хермă хуҫисем,

хресҫенсем пулнӑ. Пӗри аллипе хӗрарӑм кӑкӑрне сӗртӗннӗ те, ҫӗри хуллен тапнине сиснӗ.

— Ҫӗрӗ, тенӗ вӑл.

— Аҫисене илсе карӗҫ, тенӗ тепри.—Виҫҫӗнҫӗ вӗт вӗсем? Хӑй пит макӑрҫӗ-ҫке, аҫисем пит ҫухӑрҫӗҫ..

Унтан ҫышкипе йунаса:

— Ҫверсем, тенӗ.

Илсе кайнӑ аҫасем «Хӗрлӗ Ҫӗлӗк» паттаљйонӗн аҫисем пулнӑ, тӑпра ҫинҫе пӗр тансӑр выртакан хӗрарӑм—вӗсен амӑшӗ пулнӑ.

Пӗр ик-виҫ минутран вӑл тӑна кӗнӗ. Хресҫенсем пуҫӗсене усса вӑл йӗнине итленӗ.

— Аҫасем! Ӑҫта ман аҫасем? тесе ҫухӑрнӑ вӑл.

Унтан лӑпланнӑ. Хресҫенсем патӗнҫе сывалса пурӑннӑ ҫух ним те шарламан. Сывалса ҫитеймесӗрех, пӗрре вӑл хресҫенсене пуҫҫапнӑ та:

— Кайас пулат, тенӗ.

— Ӑҫта?

— Аҫасене шырама.

## III.

### Ҫимуртен.

Хура халӑх хушшинҫен пӑрахса кайтӑр тесе, апшӗ-амӑшӗсем, хресҫен ҫыннисем, Ҫимуртена паҫӑшкана кӑларнӑ, анҫах вӑл каллех хӗн-хур тӳсекен халӑх хушшинех кайнӑ.

Ҫимуртен пӗтӗм Европпӑри ҫ ӗ л х е с е н е, тата урӑххисене те хӑшне пӗлнӗ. Вӑл ӗмӗрех, пӗр ҫарӑнмасӑр вӗреннӗ. Ҫав ӑна хӑйне хӑй таса тытса пурӑнма пулӑшнӑ. Наукӑ турра ӗненессине те пӗтернӗ. Унран ҫемйине туртса илнӗ,—уншӑн хӑй ҫуралнӑ патшалӑхе ҫемйе пулса ларнӑ, ӑна арӑм паман, — вӑл пӗтӗм ѳгемлӗхпе ҫыхӑннӑ. Ӑна йуратма ирӗк паман,—вӑл

курайми пулнă. Вăл суйнине, патша йĕркине, хăйĕн паҫăшка тумтирне курайман. Вăл хăй мĕн тăвас тенине никăçан та тумасăр хăварман, ăна хăй çулĕвҫен пăрса йама пулман. Вăл малалла мĕн пулассине пит кĕтнĕ: малалла мĕн пулассине вăл малтанах курса сиссе тăнă, тавăракан çын килессĕн туйăннă ăна, çав çынах çынсен пур хурлăхне пĕтерсе, пурне те хăтарассăн туйăннă.

1793-мĕш çулта Çимуртен аллă пĕр çула кайнă

1793-мĕш çулта револютсиллĕ Хрантсине тăшмансем хупăрласа тăнă. Монархиллĕ Европпă Хрантсипе вăрçнă. Револютсине пĕр çав кăна анҫах хăратса тăман. Хрантсире тата краштан вăрçи пуçланса кайнă. Унта кунта пăлханусем тухса тăнă. Револютси хўтлĕхĕ Париш пулнă. Унăн йут тăшмансемпе те, патшалăхри тăшмансемпе те вăрçмалла пулнă.

93-мĕш çулта Европпă Хрантсипе вăрçнă, Хрантси Парижпеле. Револютси вăл—Хрантси Европпăна, Париш Хрантсине çĕнни пулат.

93-мĕш çулта Паришре парксемпе сатсенҫе маневрăсем тунă; хĕçпăшалсем тăвакан маçтерскуйсем пĕр ҫарăнмасăр ĕçленĕ; иртен-çўрекен çынсен шлепĕсем çинҫе пурин те виçĕ тĕслĕ коккартăсем пулнă. Хĕрарăмсем: Пире хĕрлĕ çĕлĕк килĕшет, тесе çўренĕ. Урамсенҫе револютси таштине (кармоньола) ташланă. Ташлана ҫух пĕрне пĕри: „кăвалер", „тамă" темен, „краштанин", „краштанккă" тесе ҫĕннĕ. Ҫиркўсемпе мăнастирсене çаратса, çĕмĕрсе пĕтернĕ. Мăнастирсенҫе алттарта çунакан сăмала çуттипе ташша йана. Çăкăр çитмен. Выçлăх пулнă. Таварсем хакланса кайнă. Лапкасем умĕнҫе çынсем хўреленсе тăнă, хăш ҫух хўри урам тăрăх таçта çитиҫҫенех ҫăсăлнă. Улпут хĕрарăмĕсем, хĕрарăм манахсем сутă тума тытăннă, ремеслепе хăтланнă... Хупахсенҫе ҫиркўсенҫен çаратса

тухнӑ куркасемпе ерех ӗҫнӗ. Хаҫат сутса ҫӳрекенсем: Хыпарсем... Ҫӗнӗ хыпарсем! тесе кӑшкӑрса ҫӳренӗ.

Кашни ҫын пуҫӗ тӗлӗнҫех киљйоттинӑ мӗлки вӗҫсе ҫӳренӗ. Нимӗҫсем те Париш патнех ҫитсе тӑнӑ.

Ҫапах та, халӑх хуйха ӳкни пӗртте курӑнман.— Патша таврашне пӗтертӗмӗр-ха, тесе хӗпӗртенӗ кӑна. Хӑйсем ирӗккӗн ҫара кайакансем ушкӑн-ушкӑн пухӑнса пынӑ. Пӗҫӗк аҫасем революци йуррисем йурланӑ...

— Тӳсес пулать: халь революци,—тенӗ Париш ҫыннисем.

Пӗр ҫирлӗ ҫын, пыр шыҫҫи сывлама паманран, вилес патне ҫитнӗ. Шыҫҫийӗ пит йӗрӗнмелле, усал шӑршлӑ пулнӑ, тен ҫынна та йерме пултарнӑ пулӗ; вилекене ҫӑлмашкӑн ҫӗрӗкне йухтарса кӑлармалла пулнӑ. Ҫимуртен лап ҫав ҫирлӗ ҫын патӗнҫе пулнӑ. Вӑл шыҫнӑ вырӑнтан пӗтӗм ҫӗрӗкне тутипе ӗмсе кӑларнӑ, ҫаварӗ тулнӑҫемӗн сура-сура пӑрахнӑ. Ҫапла вӑл ҫынна вилӗмрен хӑтарнӑ. Ҫавӑнта пулнӑ ҫынсенҫен пӗри унтан ыйтнӑ:

— Есӗр корољшӑн ҫавӑн пек тӑваттӑрҫҫи? тенӗ.

— Ҫук, тенӗ Ҫимуртен.— Корољшӑн тӑвас ҫукҫӗ, тенӗ.

Ҫапла туни, тата ҫапла калани ӑна Паришри ҫухӑн ҫынсем пурнакан квартгӑлсенҫе ҫапа кӑларнӑ.

93-мӗш ҫулта вӑл Париш ҫухӑнӗсене йертсе пыракан, ҫи паллӑ ҫын пулнӑ.

Пӑхмашкӑн Ҫимуртен ахаль ҫухӑн ҫын пекех пулнӑ: мӗн тӗл пулнӑ, апла тумланнӑ. Ҫамрӑкла пуҫ тӳпине хырнӑ. Ватӑласпа ҫӳҫӗ йухса кайнӑ, пуҫ ҫинҫе йулнӑ сайра ҫӳҫ пӗрҫисем те кӑвакарса кайнӑ. Ҫамки унӑн сарлака пулнӑ. Калаҫасса вӑл ҫаплӑн, вирлӗн, шутсӑр хӗрсе кайса калаҫнӑ.

Тĕнҫипе те пĕр ҫынна анҫах Ҫимуртен ахаљ ҫынна йуратнă пек мар, хăй ывăлне йуратнă пек йуратнă.

Ҫамрăк ҫухне вăл пĕр улпут килĕнҫе уҫитлĕре пурăннă. Вăл ҫав килхуҫин ывăлне вĕрентнĕ. Ҫав аҫана вăл йуратнă. Аҫана йуратма пит ҫăмăл. Аҫана темшĕн те каҫаратăн.

Ҫимуртен хăй вĕрентнĕ аҫана ҫĕререн йуратнă Вăл ăна пĕрпĕр йапала тăвакан хăй тунă йапалине йуратнă пек йуратнă. Улпут аҫине вăл ҫын тунă, пĕлмелли ҫук,—тен аслă ҫын тунă? Хăй ăшĕнҫе вăл апла шухăшланă. Вăл ҫамрăк творене хăй ăшĕнҫе мĕн пуррине пурне те панă, хăй ырă ĕҫсем тума йуратнине, хăйне хăй хытă тытнине, ҫынтан вăтаннине— пурне те ун ҫумне сыпнă, ун тымарĕсем ăшне хăйĕн шухăшĕсене, хăй шанҫăкĕсене йухтарса кўртнĕ; улпутла пуҫ мими ăшне вăл халăх ҫунне вĕрсе кўртнĕ.

Вĕрентес ĕҫ пĕтсе ҫитнĕ, аҫа пысăкланса кайнă та, Ҫимуртенăн унтан уйăрăлмалла пулнă. Анҫах Ҫимуртен ун ҫинҫен йаланах астунă, унпа тĕл пулассa кĕтсе пурăннă.

Револҙутси ҫитнĕ. Ҫимуртен хăй вĕрентнĕ аҫа ăҫтине пĕлмен. Хăй вăл халăхăн ҫи йуратнă йертсе пыраканĕ пулса ларнă.

Халҙ Ҫимуртен йатне маннă. Анҫах 93-мĕш ҫулта ăна Ропеспйерпе Танттон хисепленĕ, ун тўрĕлĕхĕнҫен, ăсĕнҫен хăранă. Марат та ун умĕнҫе аптăраса тăнă.

Ланттенакпа вăрҫакан ҫар кăмиссарне Ҫимуртена акă ҫапла кўртнĕ: те-Ланттенак маркис Вантейăри пăлхав пуҫĕ пулсан виҫĕ ернерен, Паришре Ропеспйер, Танттон, тата Марат тў-Паон урамĕнҫи хупаха канашлама пухăнна. Тўрех пĕр-пĕринпе килĕштерменни палăрса кайнă: Ропеспйерĕ—ҫи пумай ҫар

Вантейăпа вăрçма йамалла, тесе тăнă, Танттонĕ: Ђи хăрушă тăшман—патшалăх тулашĕнђи тăшман, тенĕ.

Ропеспйерпе Танттоншăн Европпăђа провинтси—тăшман пулнă. Марат вĕсем тавлашнине итлесе кулса ларнă.

— Сирĕн кашнин харпăр хăйĕн лапи пур, тенĕ вăл йулашкинђен—Тангтонăн—Пруççи, Ропеспйерĕн—Вантейă. Анђах тата тепĕр шикленмелли йапала пур. Ăна епĕ анђах куратăп. Вăл—Паришри хупахсем. Çапла çав, Парижрисем. Унта корољ майлисем пухăнаççĕ. Унта ним тума йуратман укçа хурђĕсем пухăнаççĕ. Унтан пур инкеке вĕрсе пысăклатса йараççĕ: выçлăха, таварсем хакланнине. Пĕр хупах теприпе тавлашат; унта хĕнешнисем, скантталсем...

— Есĕр пиртен кулаттăр-и мĕн, Марат? тесе сăмах пӳлнĕ Танттон.

Маратăн кĕлетки, пĕђĕк кĕлетки шутсăр çиленнипе туртăнса илнĕ, вăл кулма пăрахнă.

— Шикленмелли Паришре, тенĕ вăл каллех,— пĕр каварлă пулманнинђен шикленмелле, сиртен иксĕртен нуçласа, кашни харпăр хăй йеннелле туртма йуратат...

— Есĕр тата? тесе кăшкăрса йанă Танттон.— Есĕр хăвăр йеннелле туртмастăр-и мĕн?

— Пире тиктаттăр кирлĕ! тесе хыттăн кăшкăрса илнĕ Марат.

— Çапла, тенĕ Ропеспйер.—Есĕр, йе епĕ.

— Епĕ, йе есĕр, тенĕ Мараҭĕ.

— Тиктаттурă тăвас килђи? Туса пăхăр-ха! тенĕ Танттонĕ.

Унтан пĕр-пĕрне йунаса пит хыттăн тавлашма пуçласа йанă; çав тавлашура револютсишĕн ђи шикленмелли йапала: пуçлăхсем пĕр-пĕринпе килĕштерменни лайăх палăрнă. Сасăсем хытăран хытă йантраса

пынӑ, ӑшра пит ҫиленнине палӑртакан сӑмахсем ҫилентермеллерен ҫилентермеллерех пулнӑ; патшалӑх тулашӗнҫи тӑшмансене те, патшалӑх ӑшӗнҫи тӑшмансене те пӗтӗмпех манса кайнӑ,—револҫутсин виҫӗ пуҫлӑхӗ: Ропеспйер, Танттон, тата Марат пӗр-пӗрне тӑшман вырӑнне шутлама тытӑннӑ.

Марат ҫи малтан, ҫӑтаймасӑр:

— Револҫутсишӗн Танттон та, Ропеспйер те кирлӗ мар! тесе кӑшкӑрса йанӑ.

Ҫав вӑхӑтра алӑк кӑрик тунӑ та, такам сасси:

— Марат, есӗ тӗрӗс каламастӑн, тенӗ.. Пӳлӗме Ҫимуртен пырса кӗнӗ.

— Есӗ тӗрӗс каламастӑн, Марат, тенӗ вӑл каллех.—Есӗ усӑллӑ, Ропеспйерпе Танттон кирлӗ. Мӗншӗн вӗсене йунамалла? Пӗр каварлӑ пулмалла, краштӑнсем... Халӑх пӗр каварлӑ пулма хушать, тенӗ те Ҫимуртен, сӗтел патне утса пынӑ.

Пурне те йӗркипе тума йуратакан Ропеспйер унтан ҫапла ыйтнӑ:

— Краштанин, есӗр кунта йепле килсе кӗтӗр? тенӗ.

Марат ним ҫӗнмесӗр

— Е-е, краштанин Ҫимуртен кунта ыглашши ҫын мар, тенӗ вӑл.—Хоспота, краштанин Ҫимуртене ӗҫ мӗнлине каласа парӑр.

— Епӗр Вантейӑ ҫинҫен калаҫатпӑр, терӗ Ропеспйер.

— Вантейӑ ҫинҫен? тенӗ те Ҫимуртен, хӑйӗнҫен хушса каланӑ:

— Ҫапла ҫав, вӑл пит шиклемелле йапала. Револҫутси вилет пулсан, Вантейӑ пирки вилет. Франтсине пурӑнтармашкӑн Вантейе вӗлерес пулать, тенӗ.

— Вантейӑ пуҫлӑх тупнӑ. Вӑл хӑрушӑланса пырать, тенӗ Ропеспйер.

— Краштанин Ропейспер, кам вӑл пуҫӗ?

— Ланттенак йатлӑ çын, елӗк маркkис пулнӑскер, хӑйне хӑй Преттани принтсӗ тийекен.

Çимуртен хавасланнӑ пек пулнӑ.

— Епӗ ӑна пӗлетӗп. Епӗ ун прихутӗпҫе паҫӑшкара пурӑннӑҫҫӗ, тенӗ вӑл.

— Вӑл пит усал, тенӗ Ропеспйер.—Вӑл йалсене вут тивретсе çунтарат, аманнисене вӗлерсе пӗтерет, тыткӑна лекнисене вӗлерет, хӗрарӑмсене пере-пере вӗлерет.

— Хӗрарӑмсене?

— Ара. Вӑл хушнипеле ыттисемпе пӗрле виçӗ аҫа амӑшне персе вӗлернӗ. Аҫисемпе мӗн пулнине пӗлместпӗр... Вӑл пит лайӑх çар пуçлӑхӗ, вӑрçӑ ӗçне пӗлет.

— Нумайранпа вӑл Вантейӑра-и? тесе ыйтнӑ Çимуртен.

— Виçӗ ерне.

— Ана саккун хӳтлӗхӗнҫен кӑлармалла.

— Кӑларнӑ.

— Ун пуçне хак хумалла.

— Хунӑ.

— Ӑна тытса паракана пит нумай укçа пама пулмалла.

— Тунӑ.

— Хут укçа мар, ылтӑн.

— Тунӑ.

— Акӑ килҗйоттинӑ çине йамалла.

— Ӑна тӑватпӑр.

— Кам-ха тӑват ӑна?

— Есӗр.

— Епӗ-и?..

— Халӑха Çӑлакан комиттет сире пит нумай ирӗк парса Вантейӑна телеката йарӗ.

— Йурат, тенӗ Çимуртен.

— Ропеспйер çынсем суйласа илес ҫух нумай шухăшласа тăман—патшалăх тытса тăма пĕлекен çынсем пур те çавăн пек. Хăй умĕнҫе выртакан хут куҫи ăшĕнҫен вăл: «Хрантсуссен уйăрăлми пĕр респуплĕкĕ. Халăха Çăлакан Комиттет», тесе çырнă планкка туртса кăларнă.

— Епĕ кам çумĕнҫи телекат пулатăп? тесе ыйтнă Çимуртен.

— Ланттенака хирĕç йанă експетитси колоннин пуçлăхĕ çумĕнҫи. Анҫах сире малтанах калас пулаť: вăл[1]), ĕлĕк творен, улпут пулнă, тенĕ Ропеспйер.

— Халăх творенсене шанмасť, вăл тĕрĕссипе шанмасť, тенĕ Çимуртен.—Епĕ ĕлĕк паҫăшка пулнă. Паҫăшкана творене астуса тăма хушаççĕ пулсан, ун çинҫе икĕ хут пысăк ĕç тăраť, ун пек ҫух паҫăшкан пиг хытă тăмалла.

— Тĕрĕс! тенĕ Ропеспйер.

— Тархасланине те итлемелле мар, тенĕ Çимуртен.

Ропеспйер каланă:

— Çав творен хаҫтерех анҫах патшалăх ҫиккинҫен пынă, унта вăл хăй ăсĕпе те паттăрлăхĕпе палăрма ĕлкĕрнĕ. Вăл хăйĕн експетитсири çарне питаван йертсе пыраť. Акă икĕ ерне хушши ĕнтĕ вăл Ланттенак старике хĕссе хăваласа çÿрет.

— Анҫах ун пĕр айăп пур, тенĕ Марат.

— Мĕнле айăп? тенĕ Çимуртен.

— Ырă кăмăлĕ, тенĕ Марат.—Вăрçăра ун ҫĕри хытă, вăрçă хыççăн çемçе. Вăл ытла та каçарма, шелleме йуратаť. Вăл хĕрарăм манахсен хутне кĕрет, творен арăмĕсемпе хĕрĕсене хăтараť, тыткăна илнисемпе пупсене ирĕке кăларса йараť.

— Вăл пысăк йăнăш, тенĕ шăппăн Çимуртен.

— Вăл саккуна хирĕç кайни пулаť, тенĕ Марат.

---

1) Експетитси колоннин пуçлăхĕ.

— Кала-ха, краштанин Çимуртен, респуплĕк тăратнă пуçлăх револђутсин тăшманне ирĕке кăларса йарсан, есĕ ăна мĕн тăваттăн?

— Епĕ ăна персе вĕлерме хушăттăм.

— Йе килђйоттинă çине йама, тенĕ Марат.

— Апла та, капла та йурат, тенĕ Çимуртен.

— Апла пулсан, епĕ Ропеспйер шухăшĕпе килĕшетĕп, тенĕ Марат.—Халăха Çăлакан Комиттетăн краштанин Çимуртена пит нумай ирĕк парса, експетитси колоннин комантирне астуса тăма телеката йарас пулать. Çав комантир мĕн йатлăђђĕ-ха?

— Ковен, тенĕ Ропеспйер.

Çимуртен шуралса кайнă.

— Ковен!.. тесе йанă вăл ђăтаймасăр.

Марат ун çинђен куçне илмесĕр пăхса тăнă.

— Краштанин Çимуртен, есĕр камантушђи Ковен çумĕнђе, хаљ каланă пек, уполномођђăнни пулса тăма килĕшеттĕр-и? Апла пултăр-и? тенĕ вăл.

— Апла пултăр-и, тенĕ Çимуртен. Хăй шуралнă çемĕн хытăрах шуралнă.

Ропеспйер хăй умĕнђе выртакан перине илнĕ те, хатĕрлесе хунă планккă çине хăйĕн таса аллипе тăвата йĕрке çырса, хутпа перине Танттона панă. Танттон та алă пуснă, шап-шурă шуралса кайнă Çимуртен çинђен куçне илмен. Марат та ун хыççăн алă пуснă.

Ропеспйер каллех хута илнĕ те, ђисла лартса Çимуртена панă.

Çимуртен вуласа пăхнă.

„Респуплĕкĕн II-мĕш çулталăкĕ.

Çак хут çакна ĕнентерет: краштанин Çимуртена, Халăха Çăлакан Комиттет хушнипе, тинĕс хĕрринђи çарта, експетитси колоннин камантушђи çумĕнђе комиссарта тăраканскере, пит пысăк ирĕк панă.

Ропеспйер. Танттон. Марат.

1793-мӗш ҫул йӳнӗн 28-мӗшӗ“, тесе ҫырнӑ.

— Есӗр Ковена ҫи аслӑ камантушҫи тума пултараттӑр, вӗлерттерме те пултараттӑр. Хӑвӑр ҫинҫен ҫырнӑ приккасне ыран виҫ сехетре илетӗр. Хӑҫан есӗр кайаттӑр? тенӗ Ропеспйер.

— Ыран тӑват сехетре, тенӗ Ҫимуртен.

Ҫакӑнта вӗсем уйӑрӑлнӑ.

## IV.

## Ҫул ҫӳрекен.

Иӳн, уйӑхӗнҫи пӗр тӑрӑ, уйар кун, хӗвел аннӑ ҫух. Круа-Праншар хӑнакилӗ тӗлӗнҫе йуланутлӑ ҫын ҫаранна.

Трактир хуҫи хунарпа тухнӑ та, ҫул ҫӳрекене пӑхкаланӑ: унӑн сарлака плашҫине, хулпуҫҫийӗ ҫинҫен лаши ҫине усӑнса аннӑскерне, тата унӑн паҫӑшка сӑнӑ пек, лӑпкӑ та сивӗ питне пӑхкаланӑ. Палламан ҫыннӑн сарлака шлепӗ айӗнҫен кӑвак ҫӳҫӗ тухса тӑнӑ, шлепӗ ҫине тата виҫӗ тӗслӗ коккартӑ ҫыпӑҫтарнӑ. Тӑшмансем сыхласа тӑракан ҫӗрте ҫавӑн пек коккартӑ ҫыпӑҫтарма хӑйнӑ вӑл! Мӑйӗ патӗнҫе тӳмелесе лартнӑ плашҫӑ аркисем, аллисене ирӗке хӑварса, ик йеннелле сарӑлса тӑнӑ; ҫавӑнпа виҫӗ тӗслӑ пиҫиххи хушшине ҫиксе лартнӑ икӗ пистолет аврисене те курма пулнӑ. Плашҫӑ арки айӗнҫен шашкӑ вӗҫӗ тухса тӑнӑ.

Трактир хуҫи:

— Краштанин, есӗр кунта ҫаранас теттӗр и? тесе ыйтнӑ.

— Ҫук.

— Ӑҫталла кайаттӑр-ха?

— Тоҫа.

— Тоҫра вăрçă тăраť-çке.

— Ман лашана сĕлĕ парăр-ха, тенĕ çул çӳрекен.

Хуçи такана илсе пынă та, ун ăшне пĕр майăх сĕлĕ йарса лашин çăварлăхне вĕçертсе йанă. Унтан пĕр витре шыв илсе пынă.

— Краштанин, ҫарăнăр кунта, тенĕ вăл.

— Есĕр ывăннă. Лашăра пăхăр-ха! вăл пит тарланă.

— Лашан ывăнма йураť, çыннăн йурамасť.

— Есĕр йепле апла çав вырăнсемпе пĕҫҫен çӳреме хăрамастăр?

— Ман канвуй пур.

— Мĕнле?

— Шашкăпа пистолетсем.

— Анҫах Тоҫра вăрçаççĕ вĕт. Вăрмансенҫе пăлханакансем туллийех. Килсе пăхăр-ха.

Трактир хуçи хунарне алăкăн хăрах хĕррине çыпăçтарса лартнă хут патне илсе пынă та, йуланутлă çын лаши çинҫен анмасăрах акă мĕн вуласа пăхнă:

«Те-Ланттенак марккис хăйĕн хурăнташне Ковен викконта малтанах пĕлтерет: викконта йарса илмешкĕн марккисăн телей пулсан, вăл ăна ним шухăшласа тăмасăр персе вĕлерме хушаť», тесе çырнă.

— Акă тата хирĕç çырни те пур, тенĕ трактир хуçи. Вăл тепĕр хутне, алăкăн тепĕр хĕррине çыпăçтарнăскерне çутатса йанă:

«Ковен Ланттенака пĕлтерет: вăл, Ланттенак, тыткăна лексессĕн, ăна персе вĕлереççĕ», тесе çырнă.

— Йенер малтанхи хутне алăк çине çыпăçтарса хăварма май тупнă, пайан ир—иккĕмĕшне. Вĕсем Тоҫра вăрçаççĕ. Пĕр тăванĕ шуррисен камантирĕ, тепри—кăваккисен.

— Вăл ахаљ вăрçă пек те мар, тенĕ çул çÿрекен.—Вăл çемйори вăрçă. Вăл апла пултăр-ха. Халăхсене тĕппипех çĕнетесси йÿнех лармасť вăл,—тенĕ те. иккемĕш хутне ђеç панă.

— Епĕр, хулари сынсемпе пысăк йалсенђи сынсем, револђутсишĕн тăратпăр, хресђенсем хирĕç вăрçаççĕ, тенĕ трактир хуçи.

Трактир хуçи тĕрĕс калана: Преттанири хресђен хăйне ирĕксĕр ирĕке кăларнине хирĕç тăвă, вăл ăна пусмăр выранне шутланă; ђурасем çавăн пек йăнăшма пултараççĕ. Преттани хресђенĕ хăйĕн уйĕ çумне, хăйĕн килĕ çумне, улăм витнĕ пÿрђĕ çумне сыхăнса ларнă. Вăл хăйĕн вăкăрĕсене хăвалама, çава туптама, тырă пулă тума, тата хуратул пашалу пĕçерме анђах пĕлет. Вăл кашни ђассанђăках сăхсăхаť, таса хĕре хисеплет. Вăл Хрантси револђутсийĕн аслăлăхне тăнланса илеймен. Улпутсен йаланхи пусмăрĕнђен пĕр револђутси анђах хăтарма пултарнине тăнланса илеймен.

Пĕрре акă мĕн пулнă: пĕр пађăшка вăрçă умĕн хăйĕн мăйне çинçе кантăрапа туртса пăвса лартнă; кантăрине вĕçертсен мăйĕнђе хĕрлĕ йун пулса йулнă. Тепĕр пађăшки çарсене çав хĕрлĕ йĕре кăтартса: Акă килђйоттинă çинђе вĕлернĕскер ђĕрĕлсе тăнă! тесе кăшкăрса йанă. Хресђенсем ĕненнĕ. Е-ех! Мĕн таран тĕттĕм!

— Творенсемпе пађăшкасем Ланттенакпа пĕрле, тенĕ çул çÿрекене трактир хуçи.—Ковен хаљ Ланттенака çĕнтерсе пыраť. Вĕсем иккĕш те Ковен раттисем, кунти творенсем. Аслă туратăн пуçĕ—те-Ланттенак маркkис, кĕçĕн турађĕн—Ковен виккоит. Çав Ланттенак хресђенсем куçĕнђе пуйан кĕнеç. Вăл кунта килнĕ килменех, ун патне сакăр пин çын пуçтарăнђĕ. Тепĕр ернерен виççĕр прихут ура çине

тăђĕ. Хаљ вăл тинĕс хĕрнелле тухма хăтланат. Тухма пултарсассăн, акăљђансем тинĕс хĕррине çар кăларăççĕ. Анђах Ковен муђăшне ђарса лартнă. Тепре тата, çав Ланттенака (ăна каçпа асăнас та марђђĕ) тыткăна илнисене пит нумай вĕлерсе пĕтернĕ, вĕсемпе пĕрле пĕр хĕрарăма вĕлерттернĕ. Хĕрарăмăн виçĕ ађи пулнă, вĕсене Париинрен килнĕ пĕр паталђйон усрама илнĕ. Халĕ çав паталђйон шуррисене сехре хăптарат: никама та хĕрхенмест. Вăл „Хĕрлĕ Çĕлĕк“ патталђйонĕ. Вăл пысăках мар, анђах париншсем—усал халăх вĕт. Вĕсем хĕрарăмшăн тавăрма, ађисене çăлса кăларма шут тытнă. Ланттенак ађасене таçта пытарнă—никам та пĕлмест; çав ĕнтĕ парижсене пушшех тарăхтарат. „Хĕрлĕ Çĕлĕк“ патталђйонĕ Ковен отретĕнђе тăрат.

Кăшт ђĕнмесĕр тăрсан, трактир хуçи татах каланă:

— Ланттенак Толђа илсе хăй паттарейне Толђ тăвĕ çине майлаштарса лартастăк, тинĕс хĕррин пĕр пайĕ ун аллине кĕрсе ӳкет, акăљђансене тухма та çăмăл пулат. Вара ĕç пĕтĕмпех пĕтсе ларат.

— Манăн тăма йурамаст, манăн каймалла, тенĕ çул çӳрекен, калаçма йуратакан трактир хуçине ђарса.

— Вăл йеннелле кайма пит хăрушă; анђах сирĕн пит çывăх çын пирки кайас пулсан... сăмахран, ывăлăр пирки пулсан...

— Çавăн йышширех пирки çав, тенĕ çул çӳрекен.

Трактир хуçи лашана çăварлăхланă та, сĕлĕшĕн панă укçине илнĕ. Анђах çав вăхăтра калаçма пăрахман.

— Çак çул вĕçне çитсен, есĕр хĕреслĕ çул куратăр—унта çул йупленет: сулахайĕ Толђа кайат,

çав çулпа кайсан, есӗр тамӑках кайса кӗретӗр. Кукӑртарах çӳлӗпе кайӑр, лашине сылтӑмалла тытӑр' сулахайалла мар, тенӗ.

Çул çӳрекен лашине урипе тапнӑ та, тапранса кайнӑ. Лаши ура ђӗрнисемпе тусан вӗçтерсе анђах пынӑ. Акӑ хӗреслӗ çулӗ...

Трэктир хуçи:

— Сылтӑмалла тытӑр! тесе кӑшкӑрни илтӗннӗ.

Çул çӳрекен сулахайалла, вӑрманалла пӑрӑнса кайнӑ.

Преттани вӑрманӗсем—çиђӗ вӑрман çав вӑхӑтра хӑрушӑ пулнӑ, те Ланттенак марккис, Ховтене викконт, Преттани принтсӗ вӗсен хуçи пулнӑ. Вӑрманпа пыратӑн—пит хӑрушӑ, тискер, çын тавраш курӑнмасӗ. Симӗс турат анђах сана шлепрен, йе питрен çапса илет, йе лаша ђӗрни ђула шаклаттарса илет.

Тискер, хӑрушӑ. Анђах çын çук мар. Вӑрмансенђе, çӗр айӗнђе çулсем алтса тултарнӑ, арлансем пек çӗр айӗнђе, шӑтӑксенђе çынсем пурӑнаççӗ. Виçӗ тӗслӗ коккартӑ çыпӑçтарнӑ çул çӳрекене курӑнми паттаљйонсем сыхласа тӑраççӗ. Виçӗ тӗслӗ коккартӑ вӑл—Хрантсири револђутсин палли. Çӗр айне кӗрсе ларнӑ Преттани хресђенӗсем шлеп çине виçӗ тӗслӗ коккартӑ çыпӑçтарнӑ çынна ним шеллемесӗрех вӗлереççӗ. Çӗр айӗнђе куçа курӑнман çарсем çӳреççӗ. Вӗсем çӗр айӗнђен сиксе тухса вӗлереççӗ те, каллех çӗр айне кӗрсе кайаççӗ.

Çӗр айӗнђи çарсен сӑнӑсем, ухутник пӑшалӗсем пулнӑ. Вӗсем пур кӗперсене те çӗмӗрсе пӗтернӗ, анђах çапах та мӗн пулни çинђен пӗр пӗрне пӗлтерсе тӑма май тупнӑ. Пӗтӗм Преттани çӗрӗпех вӑрмантан вӑрмана, йалтан йала, пӳртрен пӳрте, тӗмӗрен тӗмме çынсем тӑратса тухнӑ. Ним те шикленмелле мар, тӑмсайтарах сӑнлӑ пӗр-пӗр мушикех

хăвăллă туйа ăшĕнҫе тепештĕсем (хутсем) илсе ҫӳренĕ. Тăватҫĕр пин ҫын ытла пĕлнĕ йапаласене пит хытă пытарса усранă.

Вăрмансем хушшинҫе пур ҫĕрте те атапса каймалла вĕтлĕхсем сапаланса выртнă. Елĕк креппăҫ пулнă авалхи самăксем хаљ ҫирĕп лакĕрсем пулса тăнă; йĕри-тавра ҫӳлĕ картасем тытса ҫавăрнă хермăсем пырса ҫакланма аван пулнă,—ҫавсем пурте респуплĕк ҫарĕсем кĕрсе ӳкмелли ҫип ункисем пулнă.

Револҗутси ҫарĕсем ҫав Преттанири вăрмансене кĕме хăранă.

Шлеп сине виҫĕ тĕслĕ коккартă ҫыпăҫтарнă ҫул ҫӳрекен вăрманпа пынă ҫух лашине хытă хăваланă. Инҫетре тупăсем кĕмсĕртетни хыттăнтарах илтĕннĕ ҫемĕн вăл тата хытăрах васканă.

Ыванса ҫитнĕ лаша пит йăвăр сывланă, анҫах сынĕ ывăнни пĕртте палăрман. Тăшман тулли хăрушă вăрман та ăна хăратман.

Акă вăрман пĕтнĕ. Хăйне те, лашине те канма памасăрах вăл малаллах ҫуптарнă.

Пăшал сассисем ҫывăхрах илтĕннĕ. Тољ хули те ҫывăхрах. Акă вăл. Хула мар, урам, авалхи пысăк урам. Колоннăллă ҫуртсем пĕр тан лармаҫҫĕ: хăшĕсем маларах тухса тăраҫҫĕ, хăшĕсем кайалла ҫакса ларнă. Ҫавăнпа урамĕ тăрштипех картлашкаланса тăрат. Ҫав урамсăр пуҫне хулара ҫиҫĕ пĕҫĕк урам. Ҫтенасем те, хапха та ҫук—тăшмансене тапăнма хула уҫах выртат. Анҫах аслă урамра капни ҫурҫех хреппăҫ пек ларат. Аслă урамри ҫуртсене кашнинех уйрăм вăрҫса илмелле.

Ҫул ҫӳрекен хулана кĕмелли ҫĕрте ҫаранса тăнă. Унтан лашине шпорĕсемпе тапса аслă урампа йурттарса кайнă: кăваккисем ҫĕнтернĕ пулмалла... Акă

Ковен. Вăл аманнă Вантейă çыннине алă парать. Анђах мĕн-ха ку? Револђутсишĕн хăрушăлăх çитнĕ! Ковен хăрушă çĕрте!

Шлепĕ çине висĕ тĕслĕ коккартă сыпăçтарнă çул çӳрекен ђасрах Ковен патнелле ђуптарнă: шпорăсемпе тапса лаша айаккисене пĕтĕмпех йунлантарса пĕтернĕ.

## V.

## Ковен.

Лантенака хирĕç йанă респуплĕк отређĕн пусђахĕ пулса тăнă ђух Ковен вăтăр çулта пулнă. Унăн хăй пусђарнă отретĕнђе çуран çарпа утлă çар пулнă; вăл отретре расветђĕксем те, çĕр ђавакансем те, кĕпер тăвакан сапперсем те пулнă. Лашасемпе турттаракан висĕ тупă отрете вăй парса тăнă, пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçса çӳреме те ђăрмантарман. Лантенак Ковена курайми пулнă,—хăйне лешĕ вăрçăра çĕннĕшĕн, тата хурăнташ пулнăшăн. Çав «ђĕђĕ ађи» йепле-ха револђутсионер пулма хăйнă? Çав пĕђĕк ађа, унăн тăванĕн ађи, унăн пурлăхне илмеллескер— револђутсионер пулса тăнă! Маркисăн хăйĕн ађа-пăђа пулман.

Старик вăрçма лайăхрах пĕлнĕ пулин те, çапах «ђĕђĕ ађи» ăна çĕнсе пынă. Вăрçă телейĕ йашсене ађашлама йуратать.

Вăрçа йалавах пуринђен малтан кĕре-кĕре кайнă пулин те, Ковен пĕре те аманман. Унăн çемçе сасси камантă сăмаххисене хыттăн кăшкăрса калана. Салтаксем хăйĕнђен курса вĕренђђĕр тесе, вăл хăйĕн плащђипе ђăркакса, илемлĕ пуçне ђул çиве хурса йалавах çĕр çине выртса сывăрнă,—çиле те, çăмăра та, йура та пăхман. Вăл ерех ĕçмен, тапак туртман,

йатлаçман, тупа туман. Вăрçа кайнă ђух вăл хăйпе пĕрле пуçтури, супăӈ тавраш усрамалли пĕђĕк арђа илнĕ: вăл хăйĕн ђĕрнисене, шăлĕсене, хăйĕн хура çăра çӳçне таса тытма йуратнă; канма ђарăнсан, вăл хăйĕн мунтирне, пуљђăсем шăтарса та тусан шуратса пĕтернĕскерне, хăйех силленĕ. Вăл темле хĕрарăмлах пулнă, анђах вăрçăра хайарланнă.

Ланттенак аллинђе пилĕкçĕр пин Преттани хресђенĕ тăнă. Анђах çав салтаксем хушшинђе хĕрарăмсем, ађасем те пулнă. Хресђен пулккисем тата пĕђĕккĕн вăрçнă çĕрте анђах йуранă. Ланттенак вăрманти тиккарсен çарне ђăн салтаксем тупса вăйлăлатасшăн пулнă. Вара Вантейăна никам та çĕнес çук. Вара Ковен айала пулатђĕ.

Анђах ђăн çарĕсене ăçтан тупмалла-ха? Салтакĕсене ăçта пухмалла? Çавăн пек сапаланђăк вăрçă валли çирĕп çар йепле тумалла?—Анклире!

Ланттенак вара çапла шухăш тытнă: Хрантсин тинĕс хĕрринђи хăш-хăш çĕрне йарса илес те, акăљђансене парас, тенĕ. Вăл хăйпе пĕрле ултă пин ытла ђи лайăх хресђен салтакĕ, тата хăйĕн мĕн пур тупписене илнĕ те, Толђ патнелле кайнă. Вăл тинĕс хĕрринђи Мон-Толђ йатлă çӳлĕ вырăна илсе, унта тупăсем лартса тинĕс хĕррине акăљђан çарĕсем валли тасатасшăн пулнă.

Толђа ним вăрçăсăрах илнĕ.

Вантейă трушинĕ Толђа пырса кĕнĕ те, хула тăрăх саланса кайнă. Хăйсен тупписене, пăшал-тар усрамалли йешђĕкĕсене кивĕ пасар лупасайĕсем айне пуçтарса лартсан, ывăннă хресђенсем çиме, ĕçме тытăннă; унтан урам сарлакĕшĕпе урлă-пирлĕ сарăлса выртнă та, урама картласа лартнă, сыхланасси çинђен пĕртте шухăшламан.

Ланттенак «Мон-Толђ» тийекен çӳлĕ вырăна пăхма кайнă.

Вăл çук ђух, ун выранне помошнĕкĕ йулнă. Револђутсионерсене пит асаплантарса вĕлернĕшĕн ăна «кăваккисене хăратакан» тенĕ, тата «Иманус» тенĕ—çын йĕрĕнмелле сăн-сăпађĕшĕн. Иманус тени пит усал, ирсĕр йапалана, арçури йе шуйттан пеккине пĕлтерет.

Иманус ђассовойсем тăратса тухнă та, аслă урамра пĕр пӳрт патĕнђи сак çине ларса тĕлĕрсе кайнă.

Вăл нумайах тĕлĕрмен. Анђах вăл вăранса тăна кĕрсен, ун çинелле урам вĕçĕнђен виçĕ тупă çăварĕ пăхса тăнă. Çăлтăрсем вăйсăррăн йăлтăртатнипе вĕсем кăшт анђах паллă пулнă.

Иманус сиксе тăнă.

— Кам?тесе кăшкăрнă та, пăшал персе йанă.

Ăна хирĕç тупă сасси илтĕннĕ. Çывăракан хресђен ушкăнĕ харăсах вăраннă. Хăйсем мĕн тунине пĕлмесĕр мушиксем хăйсеннисенех пенĕ. Пăшал сассисенђен хăранипе сĕм пĕлми пулнă çынсем пӳртсенђен сике-сике тухнă, кайаллах ђупса кĕнĕ, унтан каллех сике-сике тухнă та, ним тума пĕлмесĕр çын пăтти ăшĕнђе тĕртĕнкелесе çӳренĕ. Пурте пăтранса, йавăнса пĕтнĕ. Пуђăсем шăхăра-шăхăра тĕттĕме çурнă. Пăшал, тупă сассисем, тĕтĕм, лашасем кĕçенни, аманнисем кăшкăрнипе йăнăшнисем,—çавсем виттĕр тата:

— Кăваккисем! Кăваккисем! тесе кăшкăрни илтĕннĕ.

— Ђăнах. Ковен хула патне сисĕнкĕсĕр пырса ђассовойĕсене вырăнĕсенђен илнĕ, ун колоннин пуçĕ аслă урамăн пĕр вĕçне йышăннă.

Пăшал сассисем илтсенех, Ланттенак хула патнелле ђуптарнă. Кăваккисем? Анђах Ковенăн пин çурă салтак анђах-çке—Ланттенак ăна лайăх пĕлнĕ. Çав

ăссăрскер хăйĕнҫен тăват хут вăйлăрах тăшмана тапăнма хăйҫĕ-ши?

Вăл вăхăтра Иманус хресҫенсене пасар çурҫĕ патне, капмар (пысăк) ҫул çурт патне пухса лартнă; çуртăн çӳлĕ колоннисем вăрман пекех курăннă. Ҫĕрĕк сехетрен пасар вырăнĕ патне пымалла мар крепăç пулса тăнă: урапасем, тавар ҫăркисем, йешҫĕксем, пиҫкесем, пасар çуртĕнҫе мĕн пурри пурте парриката тунă çĕре кайнă. Парриката хыçĕнҫен пулҫăсем вĕçме пуçланă. Вăрçă пуçланса кайнă. Ланттенак хулана хресҫенсем парриката тунă йенҫен ҫуптарса кĕнĕ.

Лаша çинҫен сиксе анса вăл Иманус рапортне ним ҫĕнмесĕр итленĕ те, тупăсем патне кайнă.

Тупă урлă карăнса шăтăк виттĕр тăшмана пăхнă ҫух, вăл Ковена курса йанă.

Ковен аллисене хĕреслесе тытса тĕттĕмелле пăхса тăнă. Унăн тупăсем патĕнҫе çунакан факкĕл вăрăм, сарлака кĕлеткине çутатнă. Акă вăл кулса йарат анҫах, Ланттенак пĕлекен кулăпа—аҫалла-хаваслăн кулса йарат.

Ланттенак хăйех тупă тасатмаллине илнĕ, тупне аврланă та, тĕллесе персе йанă. Тупă йетри çӳлте, Ковен пуçĕ тĕлĕнҫех пӳрт стенине шăтарса пăрахнă.

Ланттенак тепĕр йетре персе йанă. Вăл Ковенран икĕ утăмра çтенана кĕрсе ларнă. Виççĕмĕш йетри Ковен шлепкине вĕçтерсе ӳкернĕ.

Ковен пĕшкĕнсе шлепкине илнĕ.

—Тарăхмалла, тесе мăкăртатнă Ланттенак.—Кăшт айаларах пулнă пулсанах, епĕ ун пуçне татса ӳкеретĕпҫĕ, тенĕ.

Ковен паттерейĕнҫи арттилерис факкĕла сӳнтерсе лартнă. Тĕттĕмре Ковен курăнми пулнă.

— Картеҫ! тесе каманта панă Ланттенак.

Ковен паттерейӑ патӗнҫен анса ӗҫ мӗнли ҫинҫен шухӑшласа тӑнӑ. Аманнисене, вилнисене, тарнисене шутламасӑр ӑна хирӗҫ пилӗк пин ҫын вӑрҫнӑ, унӑн хӑйӗн пин те иксӗртен ытла мар тӑрса йулнӑ. Пӑлханакансем вӑрҫма сиксе тухса отрет пӗҫӗккине курсассӑн, вара ӗҫ пӗтрӗ.

Ковен ҫав таврашри ҫын пулнӑ. Вӑл Тоҫ хулине лайӑх пӗлнӗ.

Вӑл аҭйуттантне хӑлхаран шӑппӑн пӗр ик-виҫ сӑмах каланӑ та:

— „Хӗрлӗ Ҫӗлӗк“ паттаљйонӗ—ман паталла! тесе кӑшкӑрнӑ.

Салтаксем хушшинҫен вуникӗ ҫын тухса тӑнӑ. Вӗсем хушшинҫе, персе вӗлернӗ арӑмӑн аҫисене усрама илес, тенӗ хаљхи ҫершант Ратуп та пулнӑ. Вӑл вилӗмрен хӑтӑлса йулнӑ.

Тӑхӑр парапанҫӑкран ҫиҫҫӗшне илсе, тата сасӑ пуласран салтаксене пӑшалӗсене улӑмпа ҫӑркаса ҫыхма хушса, Ковен вӗсене хӑй хыҫҫӑн йертсе кайнӑ.

Вӗсем ним сассӑр хулан кукӑр-макӑр урамӗсемпе пынӑ. Ҫӳреҫе хуппиисене пур ҫӗрте те хупса лартнӑ, алӑксене питӗрнӗ. Ҫынӗсем нӳхрепсене кӗрсе ларнӑ. Арпашса пӗтнӗ пӗҫӗк урамсенҫе тӗттӗм пулнӑ, ҫын тавраш пулман. Ковен салтаксене ҫав урамсемпе хӑйуллӑн йертсе пынӑ.

Ҫав ҫирӗм ҫын Ланттенакӑн пилӗк пинлӗ ҫарӗ хыҫне пырса тухнӑ.

Пӑшал ҫӑрканӑ улӑмӗсене сӳтнӗ. Вуникӗ салтак урам кӗтесси патӗнҫе ретӗн-ретӗн тӑрса тухнӑ. Ҫиҫӗ парапанҫӑк хӑйсен патакӗсене ҫӳлелле тытса кашантӑ парасса кӗтнӗ.

Тупӑсем харӑс пени умлӑ-хыҫлӑ пекех илтӗнсе тӑнӑ, хушши нумай та пулман. Пӗрре ҫавӑн пек кӑпт

лӑп пулнӑ хушӑра Ковен шашкипе сулласа илнĕ те, йантӑракан сассипе ҫапла кӑшкӑрса йанӑ:

— Иксĕр ҫын сылтӑмалла, иксĕр сулахайалла, ыттисем тўрех малалла, тенĕ.

Вуникĕ пӑшал сасси харӑс йантратса кайнӑ, ҫиҫĕ параппан аттаккӑ пуҫлама кĕпĕртеттерсе йанӑ.

— Аҫасем, штикле! Тирĕр! тенĕ Ковен.

Респупликкантсӑсем ҫапла кӑшкӑрни шуррисен сехрине йаланах хӑпартнӑ.

Хӑйсем хыҫне тӑшман пырса тӑнине сиссен, хресҫен кĕтĕвĕ: тата ҫĕнĕ ҫар килҫĕ пулĕ, тесе шухӑшланӑ. Ҫав вӑхӑтрах тата аслӑ урам вĕҫне йышӑнса тӑракан респупликкантсӑсен колонни те, Ковен ай̆уттанҫĕпе йулнӑскер, аттаккӑ тума параппан ҫапнӑ та, паррикатӑ патнелле ҫуптарнӑ.

Хресҫенсем пит хӑраса ўкнĕ. Ала виттĕр вĕҫекен ҫӑнӑх пек ҫав хресҫен кĕтĕвĕ уҫӑ уйалла вĕҫтерне, хула урамĕсемпе вӑл ҫил-тӑвӑл хӑвалакан пĕлĕт пекех пынӑ. Иманус таракансене ҫарма тӑрӑшни те ахалех пулнӑ.

Ланттенак марккис хӑй тупӑ йусанӑ та, йулашкинҫен пӑрахса кайнӑ, — ним васкамасӑр йерипен уттарнӑ.

— Ҫапла ҫав хресҫенсемпе ним тумалли те ҫук. Пире акалҫансем кирлĕ, тенĕ вӑл.

Ковен ҫарĕ пĕтĕмпех ҫĕнтерсе илнĕ.

Ковен „Хĕрлĕ Ҫĕлĕк“ патталйонĕнҫи салтаксене ҫапла каланӑ:

— Есĕр вуниккĕн анҫах, ҫапах темиҫе пин салтакран та вӑйлӑ, тенĕ.

Вантейӑ ҫыннисенҫен харсӑртараххисем пĕр иккĕш-виҫҫĕш вӑрҫах тӑнӑ, вĕсене кӑваккисем хупӑрласа илнĕ. Акӑ вĕсем те тарнӑ. Пĕри анҫах тӑрса йулнӑ. Йулташĕсене тарма пулӑшса вӑл вӑрҫса тӑнӑ,

анҫах хăй тарма шухăшламан. Пăшалĕ унăн саланса пĕтнĕ. Хăрах аллинҫе вăл пистолет тытса тăнă, тепринҫе шашкă. Анҫах акă вăл суланса кайат те, йупа çумне тĕршĕнет: ăна пуҫă пырса лекнĕ. Çапах та вăл шашкипе пистолетне аллинҫен йаман.

— Парăн! тенĕ Ковен ун патне пырса.

Аманнăскерĕн куртка айĕнҫен йун йухнă, урисем патĕнҫе йун кӳлленсе ларнă.

— Есĕ тыткăна лекрĕн. Есĕ мĕн йатлă? тесе ыйтнă Ковен.

— Епĕ Вилĕм Ташши йатлă, тенĕ аманнăскер.

— Есĕ маттур, тенĕ те Ковен, ăна алă пама тăнă.

Вантейă çынни:

— Короҫ сывă пултăр! тесе кăшкăрса йанă та, йулашки вăйне пухса хăрах аллипе Ковена пистолетпа пенĕ, тепĕр аллипе Ковен пуçĕ тĕлĕнҫе шашкăпа хăмсарса йанă.

Круа-Праншар трактирĕ патĕнҫе ҫарăнса тăнă йуланутлă çын—виçĕ тĕслĕ коккартăллă çул çӳрекен Ковенпа Вантейă çынни хушшине вĕçтерсе кĕмен пулсан, Ковен вилнĕ пулĕҫҫĕ.

Пуҫă лашине тĕл пулнă, шашкăпа касни—çыннине, иккĕшĕ те—лаши те, çынĕ те анса ӳкнĕ.

Вантейă çынни вăйсăрланса çитнипе çĕр çине кукленсе аннă.

Ковен хăйне çăлакан çынна пĕшкĕнсе пăхнă. Шашкă çав палламан çын питне çурса пăрахнă. Пиҫĕ хĕп хĕрлĕ йун пулнă. Кăвак çӳçĕ анҫах курăннă. Вăл ним сĕмсĕр выртнă. Лаши вилнĕ.

Тухтăр пынă та, каснă вырăна пăхса каланă:

— Ним те мар: тарăн каснă та, хăрамалла мар: Епĕр ăна çĕлесе лартатпăр та, пĕр ернерен вăл ура çине тăрат, тенĕ.

— Анҫах кам-ха вăл? тесе ыйтнă Ковен, палламан ҫынна тĕллесе пăхса.

— Камантир, тенĕ пĕр салтакĕ,—ҫав ҫын халҫ анҫах хулана килҫĕ. Епĕ ăна Понторсон йенҫен килнине куртăм, тенĕ.

Тухтăр аманнă ҫынăн айаккинҫи кăсйипе хыпаплаcа пăхнă та, хут ҫикмеллине туртса кăларса Ковена тыттарнă.

— Кунта хутсем ăшĕнҫе есĕр ун йатне тупаттăр пулĕ, тенĕ.

Сивĕ шывпа пĕрĕхнĕрен аманнă ҫын тăна кĕре пуҫланă: куҫ хупанкисем хуллен тапранкаланă. Вăл Ковен ҫине пит ҫемҫен, йуратса пăхнă. Ковен хут ҫикмелли ăшĕнҫе тăват татăк туса хуҫлатнă хут тупса вуланă:

«Халăха Ҫăлакан Комиттет. Краштанин Ҫимуртен»...

— Ҫимуртен? Есĕр-и... Есĕр мана ҫăлтăр-и? тенĕ вăл.

Ҫимуртен Ковен ҫинелле пăхнă. Унăн йунланса пĕтнĕ пиҫĕ калама ҫук телейлĕн курăннă

Ковен ун умне ҫăркуҫланса аннă.

— Манăн уҫитлĕ! тенĕ вăл.

— Сан аҫу, тенĕ Ҫимуртен.

Ҫимуртене хула тумин ҫуртĕнҫе тунă ласарете ҫĕклесе кайнă. Унта вăл Ковен ҫинҫеп шухăшласа выртнă.

Вăл, Ҫимуртен, револютси валли Ковена ӳстерсе панă. Вăл вĕрентнĕ ҫын халĕ ĕнтĕ керой пулса тăҫĕ: малашне тен, нумай та иртмĕ, ăна ҫуратнă ҫĕр-шывăн унпа мухтанмалла пулĕ... Ковен ҫаплă ҫарпуҫĕ пулаť. Вăл пĕтĕм Хрантси ҫарĕн пуҫĕ пулаť. Вăл айăплисене таврăракан хăрушă ҫын, пĕтерекен анкĕл пулаť...

Аманнӑ пирки шӑнтса, пӗҫертсе пӑрахни Ҫимуртене ҫыварма паман. Сасартӑк вӑл йунашар пӳлӗмрен Ковен сассине илтсе йанӑ.

— Ҫав-и?

Тахӑшӗ, саниттар пулмалла, хирӗҫ ҫапла каланӑ:

— Ҫав сире перекен ҫын вӑл. Вӑл нӳхрепе пытанса ларнӑҫҫӗ те, анҫах епӗр ӑна тупрӑмӑр, тенӗ.

Ҫимуртен вара тыткӑна илнӗ салтакран Ковен ҫапла ыйтнине илтнӗ:

— Есӗ аманни?

— Мана пӗрсе вӗлермешкӗн ман вӑй ҫителӗклӗ.

— Ун суранне ҫыхӑр та, ӑна емеллӗр.

— Епӗ вилесшӗн.

— Есӗ вилместӗн. Есӗ мана король йаҫҫӗпе вӗлересшӗнҫӗ, епӗ сана респуплӗк йаҫҫӗпе пурнӑҫ паратӑп.

Хӑйӗн шухӑшӗсенҫен вӑраннӑ та, Ҫимуртен салхулланса кайнӑ. Пусӑраннӑ сассипе: Вӑл ҫӑнах та ҫынна хӗрхенекенскер ҫав, тесе мӑкӑртатса илнӗ.

## VI.

## Турк самӑкӗ.

Йалтан йала, фермӑран херма аран-аран пӗр хӗрарӑм сӗнклеттерсе пынӑ. Тумтирӗ унӑн пӗтӗмпех ҫӗтӗк-ҫатӑк пулса пӗтнӗ. Хӑш ҫух ӑна кил хуҫисем пӳрте кӳртнӗ, хӑш ҫух хӑваласа йанӑ. Кӳрӳмесессӗн вӑл вӑрмана кайнӑ.

Вӑл вӑрҫӑ хирӗсемпе, пӑшал пенӗ вырӑнсемпе пынӑ. Пур ҫӗрте те пӑлхав хыпса илнӗ; шантарсем, мерсем, йал влаҫӗсем ниҫта та пулман. Унӑн иртенҫӳрекенсемпе анҫах калаҫмалла йулнӑ. Кашни иртен ҫӳрентенех вӑл ҫапла ыйтнӑ;

— Есӗр ӑҫта та пулин виҫӗ пӗҫӗк аҫа курман-и? Иккӗшӗ арҫын аҫа—Рене-Шанпа Кро-Аллен, тата

хёраҫа Шоршеттă. Вăл ман аҫасем. Асли пилĕк ҫула кайнă, кĕҫĕнни—хĕр аҫи ҫул та сакăр уйăхра, тенĕ.

Иртен-ҫӳрен йаланах пуҫне сулла-сулла хăй ҫулĕпе утнă. Аҫасен амăшĕ вĕсене куҫпа ăсатса малалла лăпăстатнă.

Ăна вĕлерме тăнисем ун аҫисене илсе кайнă. Вăл халăх пăлханакан вырăнсемпе ҫӳресе хăй аҫисене шыранă.

Пĕрреҫен вăл хайĕн йаланах ҫĕлхе вĕҫĕнҫе тăракан сăмахĕсене хирĕҫ ҫапла таврăса каланине илтнĕ.

— Епĕ пĕр ҫак таврашри улпут вăрҫăра виҫĕ аҫа илнĕ те, хăйпе пĕрле илсе кайнă, тенине илтнĕҫ-ҫĕ. Теп вĕсем сирĕн аҫасемех, тенĕ.

— Ăҫта вăл ҫын? Ăҫта ман аҫасем? тесе кăшкăрса йанă аҫасен амăшĕ.

— Турка кайăр, тенĕ хресҫен.

— Турк мĕн вал?

Хресҫен мĕнле ҫулпа каймаллине тăнлантарса панă—вăл каласа пĕтернĕ пĕтерменех хĕрарăм уттара та панă.

Хĕрарăм аҫисене шыраса ҫӳренĕ ҫĕр-шывра пăлханакансемпе респупликкантсăсем, Ланттенакпа Ковен ҫаплах вăрҫнă. Респупликкантсăсем Вантейă ҫыннисене ҫĕнсе пынă.

Тинĕс хĕррине тухасса шанма пăрахса Ланттенак пĕҫĕккĕн-пĕҫĕккĕн вăрҫнă. Ҫапла вăрҫмашкăн вăл хăйĕн йăхрайĕ йăха пыракан Турк самăкĕнҫе хӳтлĕх тунă.

Авкуст уйăхĕнҫе Турк самăкне Ковен отреҫĕ хупăрласа илнĕ. Тоҫра вăрҫнă хыҫҫăн кунта Ковенпа Ланттенакăн иккĕмĕш хут вăрҫмалла пулнă.

Ковен шĕвĕр тăрăллă ту ҫинҫе ларакан самăк ҫине, Ковен раттин самăкĕ ҫине, унăн тискер пашнисем ҫине, тата пашнҫă ҫумне пырса тĕкĕнекен, виҫĕ аркка ҫинҫе тăракан ҫул кĕпер ҫине пăхса тăнă.

Çимуртен ун патне пынă.

— Çак самăка илетпĕр, тенĕ.

— Ланттенакне персе вĕлеретпĕр, тесе хушса каланă Ковен.

— Ăна килђйоттинă çинђе вĕлермелле.

— Епĕ çар çынни, çар саккунĕпе вĕлересшĕн.

— Епĕ тата револютсионер, револютси саккунĕпе вĕлерестĕн.

Унтан Ковена куçĕнђен тĕллесе Çимуртен çапла каланă:

— Каллех хĕрхенесшĕн. Епĕ тахçантанпах сана сăнатăп. Мĕншĕн ха есĕ çветтуй Марк мăнастирĕнђи хĕрарăм манахсене ирĕке кăларса йатăн?

— Епĕ хĕрарăмсемпе вăрçмастăп, тенĕ Ковен.

— Вăл хĕрарăмсем халăха кураймаççĕ вĕт. Тата ватă пупсем—мĕншĕн-ха есĕ вĕсене револютси трипуналне йамарăн?

— Епĕ стариксемпе вăрçмастăп.

— Вĕсем çамрăксенђен хăрушăрах. Сийен тăвакана хĕрхенни кирлĕ мар, Ковен: патшана вĕлерекенсем—халăха ирĕке кăларакансем.

— Ирĕк манра пулсан, епĕ корол ывăлне ирĕке кăларса йарăттăмђђĕ. Епĕ ађасемпе вăрçмастăп, тенĕ Ковен.

Çимуртен салхулланнă.

— Хăйне Вилĕм Ташши тейекенскере есĕ каçартăн, тенĕ вăл.

Ковен ăна пÿлсе:

— Вăл аманнăђђĕ-çке. Вăл вăйсăрђĕ, тенĕ.

— Есĕ ăна каçарнипе респуплĕк валли тăшман туса патăн, тенĕ Çимуртен.—Вăл т а р ђ ĕ те, хал шайккă пуçлăхĕ пулса тăнă. Есĕ Ланттенака тытсан, ăна та каçаратăн.

— Çук. Хресђенсем вĕсем тĕттĕм çынсем. Ланттенак хăй мĕн тунине пĕлсе тăвать.

— Анҫах Ланттенак санӑн аратне.

— Хрантси маншӑн анне пулать.

— Ланттенак ватӑ старик.

— Ланттенакӑн ҫулӗ ҫук. Вӑл пирӗншӗн йут ҫын, вӑл пире акӑлҫансене сутать. Вӑл тӑван патшалӑхӑн тӑшманӗ. Вӑл епӗ хӗрхенессине ан кӗттӗр.

— Ковен, есӗ хал҄ ху мӗн калавине астуса тӑр.

— Астуса тӑрӑп.

— Ҫӗнтермешкӗн револ҄утсине пит хайар ҫынсем кирлӗ, тенӗ Симуртен. Вӑл нихҫан ывӑнман ҫынсене анҫах шанать. Акӑ вӑхӑт ҫитӗ, ун ҫух револ҄утсин усси террор тунине тасана кӑларӗ.

Ковен ӑна хирӗҫ каланӑ:

— Ирӗк, танлӑх, тата тӑванлӑх—мӗншӗн вӗсене хӑратмалла сӑн памалла? Ырӑ йапалана усалпа тума пулмасть. Револ҄утсин хӑрушӑ пулмалла мар, пӗрпӗрне килӗштерттерекен йапала пулмалла. Ҫын ҫӗлхипе каланӑ сӑмахсенҫен ҫи лайӑххи—амниҫти. Епӗ ҫакна анҫах пӗлетӗп: каҫарма пулмасть пулсан ҫӗнме кирлӗ мар. Вӑрҫӑра ҫух ху тӑшманусен тӑшманӗ пул, ҫӗнсессӗн—вӗсен тӑванӗ пул.

— Анҫах хал҄ мар, хал҄ пӗр-пӗринпе кӗрешнӗ ҫух мар.

Кӑшт ҫарӑнса тӑрсан, Симуртен татах хушса каланӑ:

— Хал҄хи пек вӑхӑтра ҫынна шеллени револ҄утсине сутни пулса тӑма пултарать. Сыхлан, Ковен! тенӗ.

Унтан иккӗшӗ те—Симуртенпе Ковен ним шарламасӑр тӑнӑ. Ҫав икӗ ҫын—хытӑ ҫӗреллипе хӗрхенекен кӑмӑлли пӗр-пӗринпе т у с л ӑ п у л н ӑ. Вӗсен шухӑшӗсем пӗр-пӗринпе килӗштермен. Ҫӗнмелли ҫул Симуртене лайӑх курӑннӑ: вӑл—террор. Ковене те ҫав ҫул лайӑх курӑннӑ: вӑл—ырӑ кӑмӑллӑ пулни. Хӑшӗ тӗрӗс шухӑшланӑ?

Пӗлӗт çинҫе çӑлтӑрсем тӗксӗмӗн йӑлтӑртатнӑ. Шӑп пулнӑ: вӑрманта çулçӑ кӑштӑртатни те, улӑхра курӑк вӗлкӗшни те илтӗнмен.

Самӑк йӗри-тавра хура çын мӗлкисем йӑшӑлтатнӑ. Вӑрманта йӑвӑçсем айӗнҫе, улӑхра пӗҫӗк тӗмӗсем хушшинҫе вут çутисем çутӑла пуçланӑ: вӑл Ковен салтакӗсем хунӑ вутсем пулнӑ. Çар лакӗрӗ улӑх пуçланнӑ çӗре çитиҫҫенех ҫӑсӑлса кайнӑ, тата вӑрмана ҫӑтлӑхалла кӗнӗ. Турк самӑкне йӗри-таврах хупӑрласа тӑнӑ.

Акӑ çуллахи ним сассӑр çутӑ каçа трупа сасси çурса пӑрахнӑ. Вӑл сасӑ çӳлтен, пашҫӑ тӑрӗнҫен илтӗннӗ. Трупа сассине хирӗç тӳттӳрӳт кӑшкӑртнӑ

Пашҫӑ çинҫе хӗç-пӑшаллӑ çын тӑнӑ. Вӑл тепӗр хут трупапа кӑшкӑртнӑ та, калаçма тытӑннӑ. Самӑка хупӑрласа тӑракан салтаксем ӑна итленӗ.

— Епӗ, Иманус, кӑваккисене хӑратакан, сире монçенйор Ковен-Ланттенак маркkис, Преттани викконҫӗ Хонтене, çиҫӗ вӑрман хуçи, ман улпут йаҫӗпе калатӑп. Пирӗн алӑра тыткӑнра виçӗ аҫа. Çав аҫасене сирӗн пӗр патаҫйонӗ усрама илнӗҫҫӗ: вӑл сирӗн аҫасем. Епӗр сире виççӗшне те паратпӑр, анҫах уншӑн пире пашҫӑран тухса кайма ирӗк памалла. Есӗр епир сӗннине йышӑнмастӑр пулсан, итлӗр: кӗпер çурҫӗ виçӗ хутлӑ. Айалти хутне епӗ хушнипе ултӑ пиҫке тикӗт лартнӑ, тата типӗ çапӑ кӳртсе тултарнӑ. Çӳлти хутне улӑм тултарса лартнӑ; вӑта çӗрти хутӗнҫе кӗнекесеапе токкумӗнтсем тӑраççӗ. Пашҫӑпа кӗпер хушшинҫи тимӗр алӑка çӑрапа питӗрсе лартнӑ, уççи монçенйор аллинҫе. Çав алӑк айӗнҫе, епӗ хушнипех, шӑтӑк шӑтарнӑ та, шӑтӑк виттӗр, кӗкӗрт туртса лартнӑ хӑйу йанӑ. Хӑйун пӗр вӗçне тикӗт пиҫки ӑшне антарса йанӑ, тепӗр вӗçӗ кунта, пашҫӑра; вӑл ман алӑ айӗнҫе пулаť, кирлӗ пулсассӑнах епӗ ӑна ҫӗртсе йама пултаратӑп. Есӗр пире кӑларса йама пулмастӑр

пулсан, епӗр аҫасене кӗпер ҫурҫӗн иккӗмӗш хутне хупатпӑр та, тимӗр алӑкне питӗрсе лартатпӑр. Кӗпере тапӑнатӑр пулсан, есӗр хӑвӑрах самӑка тивертсе йаратӑр; пашҫӑ ҫуракӗ виттӗр тапӑнатӑр пулсан, епӗр ӑна хамӑр ҫӗртсе йаратпӑр; пӗр вӑхӑтрах икӗ йенҫен те тапӑнма шухӑш тытатӑр пулсассӑн, епӗр пурте пӗрле самӑка ҫунтарса йарӑпӑр. Хуӗ те мӗнле пулсан та, аҫасен пӗтмеллех. Епӗ есӗр мӗн каласса кӗтетӗп: епӗр сӗннине йышӑнатӑр-и, йышӑнмастӑр-и?

Ҫимуртен айалтан хирӗҫ каланӑ:

— Епӗр йышӑнмастпӑр, тенӗ.

Ковенӗ тата хушса каланӑ:

— Епӗр сире шухӑшласа пӑхмашкӑн ҫирӗм тӑватӑ сехет паратпӑр, анҫах ним условисӗрех парӑнмалла. Есӗр парӑнмасассӑн, епӗр ыран ҫак сехетре самӑка тапӑнатпӑр, тенӗ.

— Ун ҫух вара хӗрхенессе ан кӗтӗр, тенӗ йулашкинҫен Ҫимуртен.

Пашҫӑ тӑрринҫе Имануспа йунашар Ланттенак маркқисӑн мӗлки тухса тӑнӑ.

— Есӗ-и вӑл, паҫӑшка? тесе кӑшкӑрнӑ Ланттенак.

— Епӗ ҫав, ултавҫӑ! тенӗ Ҫимуртен.

* *
*

Турк самӑкне хупса лартнӑ аҫасен амӑшӗ самӑк патне ҫывхарсах ҫитнӗ. Вӑл васканӑ, ҫупнӑ пекех пынӑ.

Пӗр йалта вӑл хресҫенсемпе пуршуй ушкӑнӗ ҫумне пырса ҫыпӑҫнӑ. Вӗсем мери пӳртумӗнҫен вуласа паракан ҫынна итлесе тӑнӑ.

Вулакан йат хыҫҫӑн йат асӑннӑ, кашни йат ҫумнех „вӑрӑ-хурах“ тесе хушса пынӑ. Ҫав йатсем хушшинҫе хӗрарӑм пӗр Ланттенак йатне анҫах пӗлнӗ.

Вулакан вунтӑхӑр йат асӑннӑ.

„Çав халђ асăннă çынсене, кирек ăçта тытсан та, пăлласассан тӳрех вĕлереççĕ, вĕсене хăйсем патне кӳртекенсене, йе тарма пулăшакансене пурне те çар сутне параççĕ, йе вĕлереççĕ. Алă пуснă: Халăха çăлакан Комиттет телекађĕ Симуртен“.

Вуласа кăтартакан малалла çапла вуланă:

„Çав пăлхатса çӳрекен вунтăхăр çынна, халђхи вăхăтра Турк самăкне хупса лартнăскерсене, никамăн та пулăшу памалла мар. Çакна итлеменнисене, правиттĕлстиă хушнă тăрăх, асаплантарса вĕлереççĕ.

„Ковен“, тесе алă пуснă.

— Турк! тесе кăшкăрса йанă ађасен амăшĕ.

Çынсем ун çинелле çаврăнса пăхнă. Вăл хăйĕн çĕтĕк-çатăк тумтирĕпе, ухмаха тухнă пек пĕр çĕрелле пăхакан куçĕсемпе тискеррĕн курăннă.

Вăл ухмах пек каллех: Турк! тенĕ те, айаккалла утнă.

— Ухмаха кайнăскер! тенĕ пĕр пуршуйĕ.

— Ђăнах пулас, тенĕ иккĕмĕш.

— Тен шпион, тенĕ виççĕмĕш.

— Апла пулмалла, тенĕ иккĕмĕш.

— Тĕрмерен тарнă хĕрарăм вăрă, тенĕ тăваттăмĕш.

— Епĕ те апла шутлатăп, тенĕ иккĕмĕш.

— Ун пеккисене персе вĕлермелле. Мĕн вăрттăн сăнаса итлесе çӳреççĕ, тенĕ виççĕмĕш çиленсе.

— Шăп тăрăр... Хамăра персе ан вĕлерђђĕр. Тăваттăмĕ те шăп пулнă.

Çынсене çавăн пек çилентерсе каларакан ђухлакаласа вăрман урлă утнă. Ывăннипе унăн ӳђĕ кăна мар, шăммисем те ыратнă. Вăл ђас-ђасах ларса канкаланă, тăрса утнă, унтан каллех ларнă. Хĕвел

анса лара пуçланă, вăрманта тĕттĕмленсе кайнă, çăра курăк ăшĕнҫе сукмаксем те палăрман. Ăçталла каймалла? Тĕрĕс пырат-ши вăл?

Сасартăк вăл вăрман хĕррине çитсе тухнă. Ун умĕнҫе вĕт тĕмĕсем шăтса ларнă тӳрем вырăн сарăлса выртнă.

— Кам та пулин пур-и кунта? Хирĕç ҫĕн! тесе кăшкăрса йанă хĕрарăм.

Ăна хирĕç инçетре тупă сасси йанраса кайнă.

Хĕрарăм çав вăйлă сасă илтĕннĕ йеннелле утнă. Акă пĕлĕтпе çĕр пĕрлешнĕ тĕлтен çӳлĕ пашҫă сиксе тухнă, анса ларакан хĕвел çуттипе вăл хĕп-хĕрлĕн курăннă. Ун хыçĕнҫе вăрман хуралса тăнă.

Вăл Турк самăкĕ пулнă, тупă сасси Ковеннпа Лантенак çарĕсем вăрçма пуçласа йанине пĕлтернĕ.

## VII.

## Вăрçни.

Вăрçă пуçланас умĕн Çимуртен трупапа кăшкăракан патне пынă та:

— Пашҫă çинелле кăшкăрт, тенĕ.

Трупапа кăшкăракан кăшкăртса илнĕ. Пашҫă çинҫен тӳттӳрӳт кăшкăртнă.

Ковен пашҫă тăрринҫе тăракан Имануспа Çимуртен пĕр-пĕринпе калаçнине тĕлĕнсе кайса итленĕ.

— Епĕ сирĕн алла лексен, есĕр хĕпĕртеттĕр-и? тесе ыйтнă Çимуртен.

— Епĕр кашнийех сан пуçушăн хамăр пуçа паратпăр, тесе кăшкăрнă имманусĕ.

— Апла пулсан, пĕлĕр: епĕ сирĕн алла пыратăп.

Çӳлте тискеррĕн ахăлтатса кулса йани илтĕнсе кайнă. Айалта шăп пулнă. Çимуртен татах каланă:

— Есĕр ман тăвансем. Есĕр аташса кайнă мĕскĕн ыннсем. Епĕ сирĕн тус. Епĕ сире тархаслатăп—

мана вӗлерӗр те, хӑвӑра ҫӑлӑр. Вӑхӑт иртмен ҭух ҭаранӑр. Тепӗр минутранах пӗр-пӗрне турамалла пулаť. Мӗншӗн ҫавӑн ҭул халӑх вӗлерес, икӗ ҫынна вӗлерсенех ҫитет. Икӗ ҫынна: мана, тата Ланттенака. Епӗ сире калатӑп: Ланттенака пире парӑр та, ун вырӑнне мана илӗр. тенӗ.

Лере, ҫӳлте, пашнҭӑ тӑрринҭе Ланттенак ним те шарламан, Имануҫӗ хыттӑн кӑшкӑрса йанӑ.

— Сан тиррӳ ун пуҫне тӑмасť. Пире апла кирлӗ мар. Калӑр-ха: есӗр епӗр сӗннине йышӑнатӑр-и? Епӗр сире самӑка хупса лартнӑ виҫӗ аҭана паратпӑр, есӗр пире самӑкран тухса кайма ирӗк парӑр.

— Пурне те—Ланттенаксӑр пуҫне.

— Монҫенйора сире памалла-и? Нихҫан та парас ҫук. Пуҫлӑр вӑрҫма!

Пурте харӑс пӑшал иерсе йанӑ та, вӑрҫӑ пуҫланса кайнӑ. Ҫимуртен самӑк ҫине салхуллӑн пӑхнӑ. Ҫапла Ковенӑн аттаккӑра пуҫарса пымалла пулса ларҭӗ. Ҫапла вӑл вилме те пултарнӑ. Ан вӗлерҭҭӗрҭҭӗ ӑна! Ӑна, Ковена, вӑл вӗрентнӗ ҫынна, ҫук, вӗрентнӗ ҫынна мар,—Ҫимуртен ывӑлне...

Самӑк ҫтенинҭи ҫурӑка тӗллесе аттаккӑ тунӑ. Ҫав ҫурӑк ҫак вӑрҫӑҭҭен тахҫан малтанах пулнӑ. Револҭутсиҭҭен тахҫан малтан Турк самӑкӗнҭи пашнҭӑ ҫтени пӗр хӗрӗх фут ҫӳллӗш ытла икӗ йеннелле сарӑлса ларнӑ. Хупӑрласа илекенсем умӗнҭе хуп-хура ҫӑвар карӑлса тӑнӑ. Сиктертсе пӑсса пӗтернӗ ҫтенаран ҫав ҫӑваралла ҫӳлте те, айалта та, айаккисенҭе те ҭул шӑлсем тухса тӑнӑ.

Ҫурӑк виттӗр пуҭӑсем шӑхӑрса тӑнӑ. Айалти хутӑн пӳлӗмӗнҭе паррикатӑ пулнӑ. Паррикатӑ ҫинҭе алла-аллӑн йарса илсе тӳпелешнӗ.

— Малалла тухӑр! тесе кӑшкӑрнӑ Ковен.

— Ҫирӗпрах тӑрӑр, туссем! тенӗ Ланттенак.

Ҫтена ҫумӗнҙе ҫунакан факкӗл пӗр-пӗрне вӗлерекен сынсене ҫутатса тӑнӑ. Вӗсем—сынсем—тӗтӗмпе суккӑрланнӑ, пӑшал сассисемпе хӑлхасӑр пулнӑ. Анҙах вӗсем кӗмсӗртетекен сасӑпа тӗтӗм виттӗр тухса тӑшмансене ҫӗнтерестӗн ҫуннӑ. Пӗрисемшӗн ҫӗнтерни революци ҫийеле тухассине пӗлтернӗ, теприсемшӗн—монархи ҫийеле тухассине.

Ванҙӑксем хушшинҙе аманнисем йӑваланса выртнӑ; ҫапӑҫаканӗсем вилӗсем урлӑ ута-ута каҫнӑ, ҙӗрӗ сурансем ҫине пуснӑ, хуҫӑлса пӗтнӗ шӑмӑсене урисемпе таптанӑ; аманнисем ыратнипе уланӑ, хӑйсене таптакансене урисенҙен ҫыртнӑ.

Хӑш ҙухне кӗмсӗртетни ҙаранса пӗр минутлӑх лӑп пулнӑ, вара ҫапӑҫакансем йӑвӑррӑн сывланисем, шӑл шӑтӑртатнисем, ылханнисем, хӑрлаттарнисем татах тискерӗн туйӑннӑ. Ҫурӑк виттӗр пашнҙӑран ҙӗрӗ йун йухса тӑнӑ. Вӑл курӑк ҫинелле сарӑлса кайса йӑсӑрланакан сарлака лупашка пулса тӑнӑ.—Пашнҙи хӑй аманнӑ та, йун йухса тӑрать, темелле пулнӑ.

Ҫапӑҫакансем хушшинҙе, ҙи варринҙе, Ковен приккас парса тӑнӑ. Пӑшал пенӗ ҫутӑпа вӑл хӑйпе йунашар паллакан сын тӑнине курса йанӑ.

— Ҫимуртен! Сире кунта вӗлереҫҫӗ. Кайӑр кунтан! тӗнӗ вӑл.

— Сана та вӗлерме пултарҫҫӗ вӗт.

— Епӗ кунта кирлӗ, ҫавӑнпа ман та кунта пулмалла, тенӗ те Ҫимуртен, Ковен патӗнҙех йулнӑ.

— Хупӑрласа илнисем, парӑнӑр! тенӗ вӑл.—Шухӑшлӑр-ха: есӗр пиртен сахал вӗт, тенӗ.

— Мӗне кирлӗ апла лӑпӑртатни? Пирӗн самӑк пур, тенӗ ӑна хирӗҫ Лантенак.

Паррикатӑ ҫинҙен каллех пуҙӑсем вӗҫме пуҫланӑ.

— Малалла! Паррикатӑ ҫинелле! тенӗ Ковен.— Кам паррикатӑна илесшӗн?

— Епӗ! тенӗ ҫершант Ратуп.

Малалла ђупас вырӑнне вӑл кайалла ђакнӑ та тапаканӗсен урисем хушшипе упаленнӗ пек пӗшкӗнсе тухнӑ, унтан пашђӑ ҫурӑкӗ виттӗр тухса курӑнми пулнӑ. Ку тарђӗ-ши капла?..

Ратуп ҫурӑк виттӗр тухнӑ та, ҫӑлтӑр ҫуттипе пашђӑна пӑхма тапратнӑ.

Ђӑнах та: иккӗмӗш хутри пӑшал пемелли ђӳређе сиктертнипе пит ваннӑ та, ҫын кӗмелӗх шӑтӑк пулса йулнӑ. Унта хӑпарса кӗме ваштак, шутсӑр ваштак ҫын кирлӗ пулнӑ. Ратуп лап ҫавӑн пек ҫын пулнӑ.

Вӑл, упӗте пек, пысӑк ура пӳрнисемпе тухса тӑракан ђулсене ђӑрмакласа илнӗ, ђӑркуҫҫийӗсемпе ђавсисене, тата ђышкисене ҫурӑк ҫтенисем ҫине пуснӑ. Ҫапла вӑл ҫӗртен хӗрӗх фут ҫӳллӗш хӑпарнӑ.

Унтан аллисем ҫинђе вӑрт ҫӗкленсе илсе, пӑшал пемелли ђӳређе карнисӗ ҫине ђаркуҫланнӑ. Икӗ аллипе те решоткаран йарса тытнӑ та, пӗтӗм пӗвӗпе ђӳређе виттӗр карӑнса, ҫӑварне шашкӑ ҫыртса, ҫӗртен хӗрӗх фут ҫӳллӗшре ҫакӑнса ларнӑ.

Сасартӑк Ратуп хӑй умӗнђен тепӗр ҫын питне курса йанӑ. Ҫынӗн йапах шӑмми саланса пӗтнӗ, куҫӗ шӑтса тухнӑ. Вӑл Иманус пулнӑ. Хытӑ аманнӑскер вӑл, уҫӑ сывлӑшпа вӑй илес тесе, унта аран упаленсе ҫитнӗ.

Иманус Ратупӑн пиҫҫиххи хушшинђен пистолеђӗсене кӑларса илнӗ, шӑлӗсемпе ҫыртса лартнӑ шашкине туртса кӑларнӑ та, хулпуҫҫинђен каснӑ. Ратуп пӳлӗмелле сиксе кӗнӗ. Иманус шашка пӑрахса ђӑркуҫланса ларнӑ. Икӗ аллинђе те упӑп пӗрер пистолет пулнӑ. Вӑл Ратупа пеме тӗлленӗ.

— Ах, йӗрӗнђӗк пит! тенӗ Ратуп.—Ку мӗн сан—пит вырӑнне ђӗрӗ катлет-и мӗн? тенӗ те, Имануса

ђышса йарса, аманнă йанах шăммийĕнђен йарса илнĕ, Иманус ыратнипе уласа йанă та, сĕмрен тухса кайсе ўкнĕ.

— Выртах, ђăлах, ан тапран. Епĕ сана каçаратăп: вилех, тенĕ Ратуп.

Вăл пўлĕм варринелле кайнă. Такăнса илнĕ. Урайнелле пăхнă та, çĕрте тĕмĕн ђухлĕ пăшал выртнине курах кайнă: пистолетсем, карапинсем, мушкетсем пулнă.

— Кунта арçенал пекех-çке! тенĕ Ратуп.

Унтан кашни аллинех ик кĕпçеллĕ пăшал илнĕ те, айалти хута анмалли пусма çине тухса, ик пăшалĕпе те харăс пусма тăрăх айалалла персе йанă. Унтан карапин йарса илнĕ те, персе йанă; ун хыççăн мушкетпе пеме тытăннă.

— Револђутси сывă пултăр! тесе кăшкăрнă хăй.

— Вĕсем çўлте! тесе кăшкăрса йанă марккис.

Паррикатă çавăнтах тасалса кайнă. Унта вăрçаканĕсем пусма патнелле ђупнă.

— Виççĕмĕш хуталла ђупăр! тесе кăшкăрнă Ланттенак.

Ратуп иккĕмĕш хутра, пусма айĕнђе ђупакансене сыхласа тăнă.

Самăка сыхлакансенђен улттăшĕ анђах çўлелле ђупса хăпарма ĕлкĕрнĕ. Вĕсемпе пĕрле Ланттенак та пулнă.

Ковенпа унăн салтакĕсем паррикатă урлă сиксе каçнă та, тăшман хыççăн ђупса кайнă. Иккĕмĕш хутра вĕсем Ратупа тĕл пулнă.

— Кăмантир, тенĕ Ратуп,—епĕ есĕр Толђ патĕнђе тунă пекех турăм. Епĕ тăшман хыçне кайса кĕтĕм, тенĕ.

— Есĕ лайăх вĕренекен, тенĕ Ковен йăл кулса.— Анђах есĕ аманнă-çке.

— Ним те мар, кӑмантир.

Иккӗмӗш хутра Ковенпа Ҫимуртен малалла мӗн тӑвасси ҫинҫен канашланӑ ҫух, виҫҫӗмӗш хутӗнҫе паррикатӑ тунӑ. Паррикатине ӗҫ ӑнасса ним ӗненмесӗр, ним тума аптӑрапӑран тунӑ.

Самӑка сыхлакансенҫен ҫиҫҫӗшӗ анҫах тӑрса йулнӑ. Ҫиҫҫӗмӗшӗ Иманус пулнӑ. Вӑл, ванҫӑк йанах шӑммиллӗскер те, шӑтса тухнӑ куҫлӑскер, Ратуп тӳртӗн тӑрса айалалла пӑшал пенӗ ҫух, ҫӳлелле упаленсе хӑпарнӑ.

Айалта аттаккӑ пуҫласа йарсан, Ланттенак каланӑ:

— Йулташсем, пӗтрӗмӗр! тенӗ.

Пурте ҫаркуҫланса ларнӑ. Пӑшал куҫӗсем пусма картлашкисем ҫумне ҫапӑннӑ сасӑ ҫывхарса пынӑ.

Ҫапӑҫакансенҫен пӗри, паҫӑшка, ура ҫине тӑнӑ та, хӗрес тытнӑ сылтӑм аллине ҫӳлелле ҫӗклесе ҫапла каланӑ:

— Сиртен кашниех хӑй ҫылӑхӗсене пурин умӗнҫе каласа кӑтарттӑр, тенӗ.

Пӑлхав тӑвакансем кашниех:

— Епӗ ҫын вӗлернӗ, тенӗ.

— Ҫветтуй тройтсӑ йаҫӗпе сирӗн ҫылӑхӑрсене каҫаратӑп. Сирӗн ҫунӑрсем канлӗн тухса кайҫҫӗр, тенӗ паҫӑшка.

— Амин! тенӗ ӑпа хирӗҫ ултӑ сасӑ.

— Халҫ вилме вӑхӑт ҫитрӗ, тенӗ Ланттенак ура ҫине тӑрса.

— Вӗлерме те, тенӗ Имманусӗ.

Кӗмелли ҫӗре йӑвӑр арҫапа картласа лартнӑ. Хупӑрлакансем ҫапнӑран арҫа шӑтӑр-шатӑр! тутарнӑ.

Сасартӑк пӳлӗмре ҫиҫӗ ҫын мар, сакӑр ҫын пулса тӑнӑ. Ҫав саккӑрмӗшӗ хавассӑн ҫапла каланӑ:

— Есӗр ӗневместӗрҫҫӗ. Епӗ сире каларӑм вӗт, монҫенйор. Ҫӗр айӗнҫе ҫул...ҫавӑрнакан ҫул, тенӗ.

Çтенара вăрттăн çÿремелли çул пулнă. Пĕр ҫулĕ çавăрăнса кайнă та, шăтăк пулса тăнă. Шăтăкĕ виттĕр пусман çÿлти картлашкисем курăннă. Çав саккăрмĕш сынĕ çавăнтан килсе кĕнĕ. Вăл Каљмало пулнă.

— Ҫасрах! тесе васкатнă вăл.—Ҫасрах айалалла пусма тăрăх анăр. Епĕ сире вăрмана илсе тухăп. Ҫасрах! тенĕ.

Анҫах çынĕсене васкатма кирлĕ те пулман.

Вĕсем аманнисене малтан йарса ансăр пусма тăрăх умлă-хыçлăн аннă. Марккис çавăрнакан ҫул çине пĕр ик-виç сăмах çырнă та, ыттисем хыççăн утнă.

Имaнус çÿле тăрса йулнă. Вăл пит аманнă. Унăн çапах вилмелле пулнă. Вăл хупăрласа ҫарса тăмашкăн йулнă.

Картласа тăракан арҫа тĕпне пăшал куҫĕсемпе çапса шăтарса пăрахнă, хупăлҫине штиксемпе тирсе шăтарса пĕтернĕ.

Иманус çав шăтăксем виттĕр пăшалпа персе тăнă. Вăл пусма тăрăх айалалла пенĕ ҫух, пĕр шăтăкĕ виттĕр штик тухнă та, Иманус тискеррĕн кăшкăрса йанă. Штик ун хырăмне тирĕнсе ларнă.

Иманус:

— Йурĕ-ха! тесе мăкăртатса илнĕ.

Йулашки вăйне пухса вăл тимĕр алăк патĕнҫе çунса тăракан факкĕл патне сĕтĕрĕнсе çитнĕ те, ăна вĕçертсе илсе кÿкĕртлĕ хăйуне тивертсе йанă.

Хăйу тивсе кайнă, Иманус вĕре-вĕре хытăрах ҫĕртнĕ. Çулăмĕ хăйу тăрăх тимĕр алăк айнелле кĕрсе кайнă та, кĕпер çинҫи самăка çитнĕ.

Хăй сийен тунипе мухтанса Иманус йăл кулса йанă. Шăппăн:

— Епĕ хамăр аҫашăн, тĕрмере асапланакан пĕҫĕк корољшĕн, вĕсен аҫисене тавăртăм-ха, тенĕ те, вилсе кайнă.

Ҫав вăхăтрах Ратуп арҫана тӳнтерсе пăрахнă та, пӳлĕме ҫупса кĕнĕ. Ун хыҫҫăн Ковен, тата ыттисем те ҫупса кĕнĕ. Пӳлĕмре никам та пулман. Ковен хунар ҫуттипе вăрттăн ҫӳремелли ҫул тĕлĕнҫи ҫул ҫине ҫырнине вуласа пăхнă:

„Сыв пул, хăспотин викконт.

Ланттенак“, тесе ҫырнă.

Вăрттăн ҫӳремелли ҫул самăкран вараллă тухнă. Ҫав варта ҫăп ҫăра курăкпа йăвăҫ тĕммисем шăтса ларнă. Унта пытанса ларнă ҫынна тупма пулман.

Марккиспа Каҫмало вара ҫитсе тухсан, унта ыттисем нихăш те пулман.

— Есĕ те вĕсем пек ту, Каҫмало, тенĕ Ланттенак, —ыран кăнтăрла Ковен ҫулĕ патĕнҫе тĕл пулăпăр. Есĕ выҫă-и? тенĕ.

Ланттенак кăсйинҫен шăкколат татăкки кăларнă та, ăна вăта ҫĕртен хуҫса ҫуррине Каҫмалона панă, ҫуррине хăй ҫиме пуҫланă.

— Халҫ кай, тенĕ вăл.

Каҫмало тĕмĕсем хушшине кĕрсе кайса курăнми пулнă. Ланттенак марккис пĕҫҫенех тăрса йулнă. Ҫапăҫусем, йун, ҫын вĕлернисем... Ҫук, нимĕн те пулман. Вăл каллех, Хрантси ҫыранне тухнă ҫухнехи пекех—пĕҫҫен.

Сасартăк пит хăрушăн кăшкăрни ун хăлхине пырса ҫапăнчă. Ăна хĕрарăм кăшкăрнă.

— Аҫасем! Ман аҫасем! тесе кăшкăрни те илтĕннĕ.

## VIII.

### Виҫĕ аҫа.

Малтанхи тупă сасси вăрҫă пуҫланнине пĕлтерсен, ҫывăракан Шоршеттă пуҫне кăшт хăпартласа пӳрнине тăснă та, айхă тĕлĕшпе:

— Пум... тенӗ.

Унтан пуҫне Кро-Аллен хулпуҫҫийӗ ҫине хурса калллех ҫывӑрса кайнӑ.

Рене-Шанӑн ҫӳҫӗ хура пулнӑ, Кро-Алленӑн ҫырӑ, Шоршеттӑн сап-сарӑ. Рене-Шан пӗҫӗк паттӑр пекех пулнӑ. Вӑл питне ҫышкисем ҫине хурса ӳпӗн выртса ҫывӑрнӑ. Кро-Алленӑн урисем карҫинккӑ хӗрринелле усӑнса аннӑ.

Вӗсем виҫҫӗш те ҫӗп-ҫӗтӗк тумтирпе пулнӑ. „Хӗрлӗ Ҫӗлӗк" патталҫйонӗ панӑ тумтирӗсем тахҫанах ҫӗтӗлсе пӗтнӗ. Арҫын аҫисем ҫара пакартан пекех пулнӑ. Шоршеттӑ ҫинҫе ӗлӗкхи сараппан ҫӗтӗкки анҫах усӑнса тӑнӑ.

Рене-Шан тӑватӑ ҫул тултарнӑ, Кро-Аллен виҫҫӗ, Шоршеттӑ пӗр ҫул та сакӑр уйӑх. Амӑшӗнҫен уйӑрса кайнӑ ҫух вӗсем макӑрнӑ. Самӑка хупса лартсан, макӑрнӑ. Анҫах кӑнтӑрлапа каҫпа ҫиме илсе пырса панисене пит лайӑх ҫинӗ. Пур ҫӗрте те вӗсем хӑйсем таврашӗнҫе хавасланмалли, кулмалли, выҫамалли тупнӑ.

Вилӗм ҫинҫен шухӑшламан. Ҫывӑрса тӑрса ҫӳреҫе виттӗр пит тӗлӗнмелле хӗп-хӗрлӗ ҫутӑ курсан вӗсем хӗпӗртесе хытса кайнӑ.

— Хитре, тенӗ Рене-Шан.

— Ӑсӑ, тенӗ Шоршетти.

— Ара-а, ӑ-ӑшӑ, тенӗ Кро-Аллен йерипен.

Турк самӑкӗ, Иманус тивертсе йанӑскер, ҫуннӑ. Вут ҫулӑмӗ пӗрре тулалла сиксе тухнӑ, тепре ункӑн ункӑн ҫаврӑнса, кукӑр-макӑр кайса тӗтӗм ӑшне пытаннӑ.

Тӗтӗм пӗлӗте хупласа илнӗ те, тӳрем тӑрӑх сарӑлнӑ. Ҫунакан самӑкран инҫе мар Рене-Шанпа Кро-Алленӑн, тата Шоршеттӑн амӑшӗ Мишшел Флешшар тӑнӑ. Вӑл пушар ҫине пӑхнӑ.—Ку хайхи

Турк самӑкӗ пулмалла-ха, тесе шухӑшланӑ вӑл. Анҫах ун аҫисем ӑҫта-ши? Вӗсем самӑкра пулас ҫук-ҫке, —самӑк ҫунаҫ вӗт. Ӑҫта вӗсене шырамалла? Ӑҫта кайас?

Ҫил тӗтӗм ҫаршавне сирсе йанӑ та, ҫаралса йулнӑ креппӑҫ сасартӑк хӑйӗн-кӗперӗ, самӑкӗ, пашни мӗнӗпех курӑнса кайнӑ,—хӗп-хӗрлӗн йӑлтӑртатса хӑрушӑн курӑнса кайнӑ.

Иккӗмӗш хугри ҫӳреҫе тӗлӗнҫе амӗш хӑй аҫисен пуҫӗсене курса йанӑ.

Вара вӑл пит хайарӑн, Ланттенака ҫарса тӑратмалла сасӑпа кӑшкӑрса йанӑ:

— Ей, турӑ... Ман аҫасем! Пулӑшӑр... Ман аҫасем ҫунса кайаҫҫӗ! Кам ман аҫасене унта хупса лартнӑ? Тӑшмансем... Ҫӑлӑр вӗсене!..

Ҫапла кӑшкӑрнисене Ланттенак вӑрттӑн ҫӳремелли ҫулпа пырса тухнӑ варта итлесе тӑнӑ. Аллинҫе вӑл аҫасене питӗрсе лартнӑ пӳлӗм уҫҫине пӑҫӑртса тӑнӑ.

Амӗш кӑшкӑрса тархасланӑ хушӑра ҫакӑн пек сӑмахсем илтӗннӗ:

— Пусма парӑр!

— Пусми ҫук.

— Шыв!

— Шыв ҫук.

Ӑна Ковен салтакӗсем кӑшкӑрнӑ.

Ковенӗ хӑй ҫирӗм саппер илнӗ те, пашнҫӗн виҫҫӗмӗш хутне, вӑрттӑн ҫӳремелли ҫул пур сала, аҫасене хупса лартнӑ тимӗр алӑк патне кайнӑ.

Пӗр алӑка ҫӗмӗрмелли кӑна йулнӑ.

Анҫах тимӗре ҫапнипе пуртӑсем хуҫӑла-хуҫӑла кайнӑ. Ҫулӑмпа тӗтӗм Ковена алӑк патӗнҫен хӑваланӑ. Ковен вӑрттӑн ҫӳремелли ҫулӑн уҫӑ ҫӑварне пӑхса, аптӑраса ҫитнипе:

— Çак çулпа Латтенак тухса кайнă, тенĕ.

— Çав çулпах кайалла таврăнатăп! тенĕ сасă илтĕннĕ те, вăрттăн çÿремелли çулăн ђул рамĕ ăшĕнђе марккис пуçĕ курăнса кайнă.

Ковен ăна нумайранпа курман. Вăл кайала шартах сикнĕ.

Марккис аллинђе пĕђĕк уççи тытса тÿрех тимĕр алăк патнелле утса кайнă та, ăна уçса йанă. Унтан çунса тăракан тинĕс ăшне кĕнĕ те, унпа Ковен хушшинђе тĕтĕмпе вут çтени пулса тăнă.

Салтаксем хупăрласа илнĕ Мишшел Флешшар:

— Ађасем, ман ађасем... Çунаççĕ! тесе кăшкăрнă.

Ратуп ун патне пырса пăхнă та, тĕлĕнсе кайнă.

— Ха, персе вĕлернĕскер ђĕрĕлсе тăнă. Анђах халĕ тĕлĕнсе тăма вăхăт çук. Лăплан. Вăл „Хĕрлĕ Çĕлĕк" патталђйонĕн ађисем. Çав патталђйонрисенђен епĕ анђах сывă йултăм. Ађасене епĕ çăлатăп, тенĕ те, кĕпер çине хăпарас тесе тапаланма тăнă. Анђах анса ÿкнĕ. Пушар пит хытă асса кайнă.

Вара Ратуп ђышкипе пĕлĕте йунанă та:

— Санăн тĕрĕслĕхÿ çавăн пек иккен, пултаракан турă! тенĕ.

Амăшĕ кăшкăрнине хирĕç çулăм, тĕтĕм ăшĕнђен ађа сассисем!

—Анне... Анне! тени илтĕннĕ.

Сасартăк ђÿређере ађасемпе йунашар Ланттенак кĕлетки курăнса кайнă. Старикĕн аллинђе вăрăм пусма пулнă, вăл ăна хуллен айалалла антарнă.

Айалта тăракан Ратуп аллисене ђăсса пусмана йарса илнĕ те:

— Респуплĕккă сывă пултăр! тесе кăшкăрса йанă.

— Король сывă пултăр! тенĕ ăна хирĕç марккис.

— Хуй те мён тесе кăшкăр, хуй те мён авăрт та, çапах епё сана турра пуççапнă пекех пуççапма хатёр, тенё Ратуп.

Пусмине тăратнă; çунакан самăкпа çёр хушшинҫе çўреме май пулнă. Çынсем ҫупса пынă. Ратуппала çирём çын пусман кашни картлашкинех пёрерён тăрса тухнă.—Ратуп ҫи çўле тăнă.

Маркнис курăнми пулнă та, тепёр çеккунтранах аҫа йăтса тухнă. Вăл Кро-Аллен пулнă. Кро-Аллен:

—Хăратăп! Хăратăп! тесе кăшкăрнă.

Маркнис ăна Ратупа тыттарнă, унтан аҫа алăран алла куçса амёш аллине кёрсе ўкнё. Кро-Аллен хыççăн Рене-Шан куçнă, унтан Шоршеттă.

Маркнис ăна тытсан, вăл йăл кулса йапă,

— Есё мён йатлă? тенё Ланттенак

— Осетт, тепё вăл.

Ратупа тыттарас умён маркнис хёраҫана ҫуп туса илнё.

Çунакан самăкра пёҫҫен тăрса йулсан, маркнис ҫўреҫе патёнҫе темиçе çеккунт хушши шухăша кайса тăнă. Унтан ним васкамасăр, пуçне мăн кăмăллăн çёклесе ҫўреҫе сулли урлă ура йарса пуснă та, ури айёнҫи хура, тарăн çыран йенне çавăрăнса пăхса. ҫёнмесёр йерипен пусма тăрăх анма пуçланă,—темле хăватпа курнакан пысăк мёлке пек, çўлё кёлеткине тўп-тўрё тытса мăн кăмăллăн утса аннă.

Çав çўлтен анакан çын çине пурте ҫётресе пăхса тăнă.

Вăл çёре анса çитсенех, урине айалти картлашка çинҫен çёре йарса пуссанах, ун хулпуççийё çине такам алă хунă. Вăл çавăрăнса пăхнă.

— Епё сана хупса лартатăп, тенё Çимуртен.

— Тёрёс тăватăн, тенё Ланттенак.

# IX.

## Ковен айапа кĕни.

Ҫавăнтах пашњăн айалги хут айĕнђи тĕрмене уҫнă. Унта лампă, пĕр курка шыв лартнă, пĕр салтак ҫăкăрĕ хунă та, урайне пĕр ытам улăм пăрахнă.

Йăвăр алăк шалт хупăннă та, Лантенак тĕрмере пĕђђенех тăрса йулнă.

Ҫимуртен Ковена калавă:

— Ыран аслă ҫар суђĕ пухăнаť. Анђах есĕ сутйе пулмастăн. Есĕ те, Ланттенак та—Ковен раттисем. Есĕ ун сутйи пулмашкăн пит ҫывăх хурăнташ. Сутра виҫĕ ҫын пулаҫҫĕ: пĕр ухвитсер—капитан Кешшар, пĕр унтĕр-ухвитсер—ҫершант Ратуп, тата епĕ претҫетаттĕлĕ пулап. Унта сан ĕҫ пулмаť. Ыран—сут,виҫмине—киљйоттинă. Вантейă вилђĕ, тенĕ.

Ковен ăна хирĕҫ ним те шарламан. Инҫетри ђиркӳ ђанĕ вунпĕр сехет ҫапнă. Ҫимуртен вĕлермелли вырăн хатĕрлеттерме, хăҫан вĕлересси ҫинђен калама, тата пур кирлĕ ĕҫсене тума хушмашкăн кайнă.

Ковен вăрҫăра вилнĕ ҫынсен йунĕпе йунланнă улăх тăрăх хуллен уткаласа ҫӳренĕ; пашњăна ҫав улăх йенђен тапăннă. Самăк ҫунса пĕте пуҫланă. Ратуп Мишшел Флешшарпа ҫăлнă ађасем тавра ђупкаланă. Салтаксем шăтăксем алтса вилнисене пытарнă, аманнисен суранĕсене ҫыхнă, паррикатине ҫĕмĕрнĕ, пашњăри пӳлĕмсене, пусмасене вилĕсенђен тасатнă, вăрҫă вырăнне тирпейленĕ.

Ковен ҫавна пĕрне те асăрхаман. Плашђипе ђĕркенсе, вăл улăх тăрăх утса ҫӳренĕ. Унăн плашђи хĕррисене ахаљ пир хăйупа тавăрса ҫаптарса лартнă; ҫавăн пек хăйу отрет пађаљнĕкĕсен палли пулнă. Ковен тем ҫинђен шухăшласа хутран-ситрен пашњă ҫтенин ҫурăкĕ йеннеле пăхнă. Ҫимуртен хушнипе

çав çурăк патне икĕ хут нумай хурал тăратнă. Хăш ђух тата Ковен аллисене çӳлелле тăратса пӳрнисене пĕр-пĕринђен çеклентерсе лартнă та, плащђă пашлыкĕ тăхăннă пуçĕ хыçнелле тытнă. Вăл шухăша кайнă.

Ăна пĕр шухăш аптăратса çитернӗ. Ковен Ланттенак хăйне хăй йуратакан, усал çын пулнине пĕлнĕ. Çын мĕнле усал пулма пултарат, Ланттенакра çав пурте пулнă: вăл усал ђĕреллĕ, мăн кăмăллă, йăнăш çулпа кайакан, кутăн çын пулнă. Халђ çав çынах Ковен куçĕ умĕнђе урăхла пулса тăнă. Ланттенак хăйне хăй пĕтерсе ађасене вутран çăлнă.

Саккун хӳтлĕхĕнђен кăларнă Ланттенак вĕçерĕнсе тарнă. Вăл вăрмана кĕрсе кайса çухалнă. Вăл каллех хăрушă çын пулса тăма пултарнă, çĕр айĕнђи çарсене йĕртсе пыракан çын, пуриннө те сехрисене хăпартакан вăрман хуçи пулса тăма пултарнă. Анђах вăл хăй ирĕкĕпех ирĕклĕ, шиксĕр пурнăçа пăрахса вилĕме хирĕç кайнă,—малтан вут çине кĕрсе кайнă, унтан пурне те çăлакан, хăйне пĕтерекен пусма тăрăх çĕре аннă.

Çавна вăл, виçĕ ађапа çăлас тесе, анђах тунă. Халĕ ĕнтĕ ăна хăйне мĕн тăваççĕ?

Пуçне таттараççĕ.

Çав ĕнтĕ паттăрлăхшăн, ырă ĕç тунăшăн тӳлесе татни пулат... Çав ĕнтĕ ун умĕнђе, Ковен умĕнђе пулат... Çавна тума парат-ши вăл?

Анђах Ковен Çимуртене: Ланттенака хĕрхенес çук, тесе ђаплăн каланă вĕт.

Вăл çапла. Анђах Ланттенак урăх çын пулса тăнă. Вăл халђ ĕлĕкхи пек тискер мар, çынна ним хĕрхенмесĕр вĕлерекен палађ та мар.

Ланттенак керой пулса тăнă. Ланттенак çапла пулнинђе Ковеӊ сасартăк Ланттенакпа иккĕшин йунĕ пĕр тăваннине курнă. Ланттенак ушăн йут

çын мар.—йунĕпе те, шухăшĕпе те çывăх тăван пулса тăнă.

Çавăнпа та Ланттенака çăлас пулат.

Револутсин ӑи хăрушă тăшманне, виçĕ уйăх хушши алла кĕмесĕр çӳренĕ çынна, йулашкинӑен, халĕ анӑах тытпăскере, çăлмалла! Револутсине пусарасшăн Хрантсийе Анклине сутма шухăплана çынна çăлмалла! Çав çынна çăлни патшалăхри вăрçа пĕтерни пулат.

Ăна ирĕке кăларса йарсан, вăл хайĕн усал ĕçне каллех мĕнле хăрушăн тытăнĕ-ши?! Каллех йалсем, пӳртсем çунма пуçлĕç, каллех тыткăна илнисене, аманнисене вĕлерме тытăнĕç, хĕрарăмсене персе вĕлерĕç. Хал çав усал çын тытăннă. Вăл вилет те, унпа пĕрле пăлхану та, тăвана тăван вĕлерекен тискер вăрçă та вилет.

Мĕн пирки, мĕншĕн Лантенака ирĕке кăларса йамалла? Виçĕ аӑана çăлнăшăн-и?

Анӑах вăлах çав аӑасене пĕтересшĕн пулнă вĕт. Вăл вĕсен сăпкисене çунса каймалла пӳлĕме пырса лартнă. Вăл—вут тивертекен, çын вĕлерекен. Йулашкинӑен, ӑăнах, вăл хăйĕнӑен хăй хăраса ӳкнĕ. Тискеррипех йулман—унăн ырă ĕçĕ те çавă çеç.

Лантенакăн усал ĕçĕсемпе танаштарсан, ниме те тăмасть вĕт çав ырă ĕç!

Ковен иккĕленсе тăнă. Вăл пит асапланнă.

Çур çĕр çапнă, унтан пĕр сехет. Пашӑă çурăкĕ патне пĕр ик-виç утăма пырса тăнине Ковен хăй те сисмен.

Сӳнсе пыракан пушар йĕри-тавра вăйсăр, сапăнӑăк çутă анӑах сарса тăнă. Тĕттĕм çĕрте вут çутти вăлт-валт туса тăни пур йапалана та пит пысăккăн кăтартнă.

Ковен вутпа тĕтĕм тавлашнине лайăххăн, тĕллесех пăхман.

Сасартăк пушар ăшĕнҫен вут пуҫҫи вĕҫҫе тухнă та. самăк умĕнҫе ҫӳлĕ вырăн ҫинҫе тăракан темле йапалана ҫап-ҫутă ҫутатса йанă.

Вăл киҫйоттинă пулнă. Ун патĕнҫе икĕ ҫын тăнă.

Икĕ сехет ҫапнă. Ковен урисене вăраххăн, ни утас, ни утас мар пек пусса пашҫă ҫурăкĕ патнелле утса кайнă. Ҫассовой ăна ҫеҫ панă. Ковен пашҫăн айалти хутне, хуралсем тăракан ҫĕре кĕрсе кайнă. Маҫҫа ҫинҫе хунар ҫакăнса тăнă. Ҫав хунар ҫутти пӳлĕме ҫывăракан хуралҫăсене таптамасăр иртсе каймаллăх анҫах ҫутатнă.

Кăмантир кĕнĕ ҫух, выртаканĕсем хăшĕ сиксе тăнă, хурал пуҫлăхĕ ухвитсер те тăнă.

Ковен ăна аллипе кăтартса:

— Уҫăр, тенĕ.

Урлуҫҫисене илнĕ. Ковен тĕрмене кĕрсе кайнă та, ун хыҫҫăн алăк хупăнса ларнă.

Ланттенак камĕр тăрăх кĕтесрен кĕтесе утса ҫӳренĕ. Алăк кăриклетнине илтсен, вăл пуҫне ҫĕкленĕ те, урайĕнҫе, Ковенпа ун хушшинҫе ларакан хунар иккĕшин пиҫĕсене те ҫутатса йанă. Вĕсем пĕр-пĕрне пăхса илнĕ те, иккĕшĕ те хăйсен вырăнĕнҫен тапранман.

— Сывă-и-ха есĕр? тенĕ маркис. —Есĕр ырă кăмăллă пулса мана курма килтĕр-и-ха? Уншăн тав тăватăп сире. Епĕ сирĕнпе калаҫмашкăн пит хавас, мана киҫем пулма та пуҫланăҫҫĕ, тенĕ.

Ковен Ланттенак ҫине ним ҫĕнмесĕр пăхса тăнă.

—Епĕ есĕр кунта килнĕшĕн хĕпĕртетĕп, тенĕ малалла Ланттенак.—Лайăхрах пăхăр: сирĕн умра творен тăрать. Творен вăл, хăвăрах пĕлетĕр, турра ĕненет, ҫемйине ĕненет. Вăл авалхисене пăрахмасть, хăйĕн аслашшĕсене хисеплет, ашшĕ мĕн тунине тăвать. Вăл хăй сăмахне тĕрĕс тытса пырать, саккуна,

патшана йепле хисеп памаллине пӗлет. Вӑл саккунсене, ырӑ ӗç тунине, тӗрӗс сут тунине хисеплет. Вӑл сире пит хавасланасах персе вӗлерӗттӗ. Анҫах есӗр мӗн тӑраттӑр-ха? Ларӑр-ха урайне. Кунта пукансем çук. Пыљҫӑк ӑшӗнҫе пурӑнакана урайне ларма та йурат, тенӗ.

Ковен ним те ҫӗнмен.

— Пыљҫӑк тесе епӗ есӗр халӑх тейекен йапалана калатӑп, тенӗ Ланттенак. Ак çакӑнта, çак пӳлӗме ӗлӗкхи вӑхӑтра улпутсем мушиксене хупса лартатҫӗç. Халҫ мушиксем улпутсене лартаççӗ. Çав лӑпӑр-лапӑра, револҫутси, теççӗ.

Маркис кулса илнӗ.

— Вӑтӑр ултӑ сехетрен ман пуçа касса татаççӗ. Вӑл нимех те марҫҫӗ те, анҫах тапаксӑр лайӑх мар. Тапак кирккине епӗ çӳле манса хӑварнӑ. Йурӗ-çке. Епӗ сире акӑ мӗн каласшӑн: есӗр манпа пӗр хурӑнташах, есӗр творен, есӗр—Ковен тавраш. Çапах йурӑхсӑр çын пулса тӑтӑр. Тӑшмансем сире усал çын шутне хураççӗ, тусусем ухмах шутне. Есӗр тӑрӑ ухмах, тенӗ те Ланттенак, Ковене мӑшкӑласа пуç тайнӑ. Унтан пуç пӳрнисене шилет кӑсйине ҫиксе çапла каланӑ:

— Сирӗншӗн пӗтӗм ҫап та манӑн лаша тарçипе танашнинҫе анҫах. Есӗр аҫа ҫухах, епӗ старик пулнӑ. епӗ сирӗн сӑмсуна шӑлнӑ, халҫ те шӑлатӑп. Есӗр çитӗнсе çитнӗ пулин те, çапах аҫа пекех, çитӗннӗ çемӗн есӗр пӗҫӗкленсе пынӑ. Епӗр пӗр-пӗринҫен уйӑрӑлнӑранпа пирӗн çулсем уйӑрӑлса карӗç: епӗ таса хисеп çулӗпе кайрӑм, есӗр йӗрӗнмелле, йурӑхсӑр çынсемпе туслашрӑр, тенӗ.

Старик ним пӑшӑрханмасӑр калаçнӑ, хӑш ҫух кӑна кулкаласа илнӗ. Ковен ӑна пӗр ҫармасӑр итлесе тӑнӑ.

— Сывă пул, Хрантси ђаплăхĕ, тенĕ старик. —Сирĕн йышши çынсем тăван çĕр-шыва пĕтерсе хуђĕç. Есĕр çĕнĕ çынсем пуласшăн-и? Çĕнĕ майлă пурнăрах, çынсенђен карлĕксем пулса тăрăр, вĕтелĕр. Анђах пире çынсемех пулма ирĕк парăр. Короља сене вĕлерĕр, пађăшкасене вĕлерĕр, пĕтерĕр, çĕмĕрĕр, салатăр, кивĕ саккунсене, кивĕ йăласене урусемпе таптăр, алтарсене варлăр, турра пăрахăçа кăларăр, çĕмрĕксем çинђе ташлăр, — вăл сирĕн ĕç. Есĕр — патшалăха сутакансем, паттăр ĕç тума пултарайман хăравçăсем.

Кăшт ђаранса тăрсан, Ланттенак татах каланă:

— Епĕ хаљ сире пит йӳçĕк ђăн сăмахсем нумай каласа тăкрăм. Анђах ман нимрен те хăрамалли çукçке! Епĕ вилĕ, тенĕ.

— Есĕр ирĕклĕ çын, тенĕ Ковен.

Вăл маркис патне пынă та, хăйĕн плашђине хывса Ланттенак хулпуççийĕ çине хунă, плашђă пашликне куçĕсем çине антарса лартнă. Вĕсем иккĕшĕ те пĕр тан пулнă.

— Есĕ мĕн тăватăн? тенĕ маркис.

Ковен ăна хирĕç ним ђĕнмесĕрех:

— Поруђђĕк, уçăр! тесе кăшкăрса йанă.

Алăк уçăлнă.

— Ман хыççăн питĕрĕрех! тесе каллех кăшкăрнă та, тĕлĕнсе хытса кайнă маркиса алăк сулли урлă ђышса кăларса йанă.

Хурал тăракан пӳлĕмри хунар лайăххăн çутатман. Çывăрман салтакĕсем хăйсем çумĕн пĕр çӳлĕ çын алăк патнелле утса иртсе кайнине курнă. Ун çинђе кăмантирсем тăхăнакан плашђă пулнă. Вĕсем ăна ђеç панă та, çынĕ тухса кайнă.

Ђассовой Ланттенака курсан, Ковен, тесе шутланă. Маркис ирĕке тухса кайнă.

Ун ури куракӗ ҫине пуссан, ӑна вӑрманпа уй сывлӑшӗ ҫӗртсе йарсан, вӑл ҫаранса тӑнӑ та, пӗр минут хушши вырӑнтан тапранман. Унтан сылтӑм аллине тӑратса пӳрнисене шаклаттарнӑ.—Апла иккен! тесе мӑкӑртатса илнӗ те, малалла уттарнӑ.

Ковенӗ ҫӗр айӗнҫи тӗрмере ларса йулнӑ.

# X.

## Сут туни.

1793-мӗш ҫулта ҫар трипуналӗн претҫетаттӗлӗ хӑй пӗҫҫен сутри темиҫе ҫын вырӑнне пулнӑ. Вӑл сутӑн ытти ҫленӗсене суйланӑ, сасӑ памалли йӗркене кӑтартса панӑ, хӑйех тӗпҫенӗ: вӑл сутра сутйе те, хуҫа та пулнӑ.

Ҫимуртен пашнҫӑн айал хутӗнҫи пӳлӗмӗнҫе, хаҫ хурал тӑракан ҫӗрте сут тумалла тунӑ. Вӑл сут ӗҫне кӗскетсе, сут туса вӗлерес ӗҫе ҫасрах пӗтерсе хурасшӑн пулнӑ.

Вӑл хушнипе сут шӑп кӑнтӑрла пуҫланнӑ.

Сутйисем хырӑ сӗтел хушшинҫе виҫӗ улӑм пукан ҫинҫе ларнӑ. Сӗтел ҫинҫе ларакан икӗ ҫурта пӳлӗме ҫутатса тӑнӑ. Сӗтел ҫинҫе икӗ ҫернил кӗленҫи, хӗрлӗ сӑркӑҫ татӑкки, пӑхӑр пиҫет, таса хут листисем пулнӑ, тата икӗ плаккат сарса хунӑ: пӗринҫе саккун хӳтлӗхӗнҫен кӑларнӑ ҫынсен йаҫӗсем пулнӑ, тепри—Конвент текреҫӗ.

Парижри револуцилӗ Советӑн (Конвентӑн) текреҫӗ пит тӑнланмалла пулнӑ: пӑлхав тӑвакан ҫынна, тыткӑна лекнӗскере тартнӑшӑн кашни ҫар пуҫнех вӗлермелле, тенӗ.

Ҫав текрет Ҫимуртене ҫара йарриҫҫенех тухнӑ мӗн, анҫах Марат: Ҫимуртене Ковен сывӑх ҫынсем пулӗ, тесе ҫав текрете тепӗр хут ҫирӗплетсе кӑларттарнӑ.

Варринђи пукан ҫинђе Ҫимуртен ларнă, сылтăм йенђе сутăн аслă ђленĕ, Ковен атйуттанђĕ кăпитан Кешшан, сулахайра кĕҫĕн ђленĕ ҫершант Ратун ларнă.

Тата икĕ хыҫсăр пукан ҫинђе, сĕтел пуҫĕсенђе проккурорпа ҫекреттар ларнă. Ҫимуртен ларакан пукан хыҫне виҫ тĕслĕ йалавсем тăратнă. Сут тунине пăхса тăраканĕсем салтаксем пулнă.

Ҫимуртен тĕрме алăкне хирĕҫех ларнă. Вăл хурмăллă тум тăхăннă: виҫ тĕслĕ коккартăллă шлеппе пулнă, айаккинђе шашкă, пиҫҫи хушшинђе икĕ пистолет пулнă. Ун пиђĕ ҫинђе Ковена вилĕмрен ҫăлнă ђух шашкăпа каснă йĕр хĕп-хĕрлĕн курăнса тăнă.

Ҫимуртен хатĕрлесе хунă хута канверт ăшне ђиксе ҫыпăҫтарса лартнă та, йури йаракан ҫынна тыттарнă. Лешĕ тухса кайнă та, лапа ҫине утланса сиккипе вĕҫтернĕ.

Хут ҫине акă ҫапла ҫырнă:

„Краштăнсем. Халăха ҫăлакан Комиттет ђленĕсем! Ланттенака тытнă, ыран вĕлереҫҫĕ“, тенĕ.

Унтан Ҫимуртен:

— Тĕрмене уҫăр! тенĕ.

Шантарсем урлуҫҫи йанисене илнĕ те, алăкне уҫса тĕрмене кĕрсе кайнă.

Ҫимуртен пуҫне ҫĕкленĕ, аллисене кăкăрĕ ҫине хĕреслесе тытнă та, алăк ҫинђеп куҫне илмесĕр: Ристанне илсе кĕрĕр, тесе кăшкăрса йанă.

Уҫă алăк тĕлĕнђе икĕ шантар курăнса кайнă. Вĕсем хушшинђе ристан пулнă. Вăл Ланттенак мар, Ковен пулнă.

Ҫимуртен шартах сикнĕ те:

— Есĕ-и вăл? тенĕ.

Унтан ђасрах васкаса:

— Епĕ ристана илсе килме хушнăђђĕ, тенĕ.

— Ристанĕ—епĕ, тенĕ Ковен.

— Йепле? Ланттенак ăçта?

— Ланттенак ирĕкре.

— Тарнă-и?

— Тарнă.

— Пĕлетĕп, пĕлетĕп, тенĕ Çимуртен ҫĕтрекен сасăпа,—вăл самăк хуçи вĕт, вăл пур шăтăк-çурăксене те пĕлет. Тĕрмерен вăрттăн тухмалли çул пур пулĕ. Ăна никам та пулăшман, никам та пулăшман çав, тенĕ.

— Ăна пулăшнă, тенĕ Ковен.

— Кам пулăшнă? Çук, апла пулас çук!

— Епĕ.

— Есĕ аташатни мĕн?

— Епĕ ун патне тĕрмене кĕтĕм. Епĕ ăна хам плащҫа патăм, вăл тухсă карĕ, епĕ йултăм.

— Есĕ ун пек тума пултарас çук!

— Турăм.

— Апла пулас çук!

— Ҫăнах та апла.

— Ланттенакне илсе килĕр!

— Епĕ сире: вăл тарҫĕ, тесе каларăм вĕт.

— Есĕ... есĕ ухмаха кайнă!

— Епĕ ҫăн калатăп.

Çимуртен ҫĕлхине аран çавăрса çапла каланă:

— Апла пулсан есĕ...

— Вилме тивĕçлĕ, тенĕ Ковен.

Çимуртен, шуралса кайса, ним тапранмасăр ларнă. Ун çамкинҫе тар тухса кайнă.

— Шантарсем, айăплă çынна хăй вырăнĕ патне илсе пырăр, тенĕ вăл.

Ковен хыççăр пукан çине ларнă.

— Шантарсем, шашкăрсене туртса кăларăр, тенĕ Çимуртен.

Айăплă çынна вĕлермелле тумалла ҫух, çар суҫĕсен ун пек йăла пулнă.

Шантарсем шашкисене туртса кăларнă.

Çимуртен сасси каллех хытнă. Вăл Ковен йенчелле пăхса çапла калавă:

— Айăплă çын, ура çине тăрăр, тенĕ.

Вăл ăна урăх „есĕ“ тесе ҫĕнмен.

Ковен тăнă.

Çимуртен тĕпҫеме пуçланă.

— Мĕн йатлă?

— Ковен.

— Сирĕн ҫин?

— Çурçĕр йенҫи çырансем патĕнҫи експетитси колоннин камантушҫийĕ.

— Есĕр çав тарнă усал çыннăн хурăнташĕ пулатăр-и?

— Епĕ ун тăванĕн ывăлĕ.

— Есĕр Конвент текретне пĕлетĕр-и?

— Çав сирĕн патра сĕтел çинҫе выртаканскерне-и? Пĕлетĕп.

— Çав текрет пирки есĕр мĕн калама пултаратăр.

— Епĕ ун çине хам алă пуснă, вăл хушнине пурне те туса тăма хушнă, тата айала, ман йат ларакан çĕре хам хушса çырса хунă.

— Хăвăра валли ваккат суйлăр.

Епĕ хамшăн хамах тăрăп.

— Калăр.

— Акă мĕнле, тесе пуçласа йанă Ковен.—Ман куç умĕнҫе ырă ĕç туни Ланттенакăн пур усал ĕçĕсене те мантан хупласа илҫĕ. Старик... çăлнă аҫасем... çавсем пурте ман ума пырса тăрса, мана хам мĕн тумалли çинҫен мантарҫĕç. Епĕ çунакан йалсем çинҫеп, таптаса пĕтернĕ уйсем çинҫен, тыткăна лекнисемпе аманнисене вĕлерни çинҫен, персе вĕлернĕ хĕрарăмсем çинҫен манса карăм, Хрантсине акăлҫансене сутнине мантăм та, тăван çĕр-шыва вĕлерекене ирĕке

кăларса йатăм. Епĕ айăплă. Епĕ çакна кăна хушса калама пултаратăп: ман наҫаҫлӊнĕк пулса хамăн ыттисене пример кăтартса пымалла пулнă, сирĕн те сутйесем пек пулса хăвăрăн пример кăтартса памалла.

— Мĕнле пример?

— Мана вĕлермелле тăвăр.

— Вăл тĕрĕс пулаĭ теттĕр-и?

— Тĕрĕсрен те ытларах: вăл кирлĕ.

— Ларăр.

Проккурор кĕске сăмах каласа текрет вуласа кăтартсан, Çимуртен кăпитан Кешшана сăмах панă.

— Саккунта пит тăнланмалла каласа панă, тенĕ Ковен атйутанҫĕ.—Çынна шеллени вăл хăш ҫухне саккуна хирĕç туни пулаĭ. Ковен кăмантир пăлхав тăвакана, Ланттенака тарма пулăшнă. Ковен айăплă. Епĕ ăна вĕлермелле тумалла тесе сасă паратăп, тенĕ.

Çекреттарĕ: кăпитан Кешшан вĕлермелле тăвасшăн, тесе çырса хунă.

Ковен каланă:

— Кăпитан, есĕр тĕрĕс тăвасшăн. Тав тăватăп сире, тенĕ.

Ратупăн сăмах каламалла пулнă.

Вăл ура çине тăрса, сут умне тăратнă сынна ҫеç панă та, çапла каланă:

— Мана та унпа пĕрле килйоттинă çинҫе вĕлерĕр. Старик аҫасене çăлҫĕ. Кăмантир çавăншăн старике ирĕке кăларса йанă. Ырă ĕçсемшĕн сынсене вĕлерме йурамасĭ. Йурамасĭ! Çитменнине тата Ковен çав пăлхав тăвакан сынсене тăвата уйăх хушши хăваласа çӳрерĕ, респуплĕкшĕн вăрçрĕ... Çук, ăна килйоттинă çине йарас пулсан,—епĕ нимне те тăнланмастăп, тенĕ те Ратуп, вырăнне ларнă.

Çимуртен ун йеннелле çаврăнса пăхнă.

— Есĕр сут умне тăратнă çынна тасана кăларасшăн-и? тенĕ.

— Епĕ ăна кенерала кĕрттерестĕн, тенĕ Ратуп.

— Тĕрĕсрех калăр.

— Епĕ ăна респуплĕкре ђи аслă çын тутарасшăн.

— Ыйтнине хирĕç тĕрĕс калăр.

— Епĕ ун пуçĕ вырăнне ман пуçа таттарасшăн.

— Апла пулсан, есĕр ăна тасана кăларасшăн курăнаť, тенĕ Çимуртен.

Çекреттарĕ: Çершант Ратуп тасана кăларасшăн, тесе çырса хунă. Унтан:

— Пĕр сасă вĕлермелле тăвасшăн, тепĕр сасси тасана кăларасшăн. Сасăсем уйăрăлса карĕç, тенĕ.

Ĕçе йепле тăвасси Çимуртентен килнĕ.

Вăл вырăнтан тăнă та, шлепне хывса сĕтел çине хунă. Хаљ ун сăнĕ шурă та мар, тăпра тĕслех пулса кайнă.

Шўлĕмре шăп пулнă: калаçни те, кăштăртатни те илтĕнмен.

Çимуриен ним васкамасăр хытă сасăпа çапла каланă:

— Сут умне тăратнă çын Ковен, епĕр сирĕн ĕçе пăхса тухрăмăр. Респуплĕк йађĕпе çар суђĕ икĕ сасăпа пĕр сасса хирĕç...

Кунта вăл ђарăнса тăнă. Ковенăн пурнасси, йевилесси Çимуртен сассинђен килнĕ. Пурте сывлама ђарăнса итлесе тăнă.

— ... сире вĕлермелле тăваť, тесе пĕтерсе хунă Çимуртен.

Ратуп сĕмрен тухса анса ўкнĕ; ăна çĕклесе тухса кайнă.

Çимуртен шлепне тăхăннă та, çапла каланă:

— Ковен, ыран хĕвел тухаспа сире вĕлереççĕ, тенĕ.

Ковен тăнă та, сута пуç тайнă.

— Сутйесене тав тăватăп, тенĕ.

— Айăплă çынна илсе кайăр! тенĕ Çимуртен.

Ковен тĕрмене кĕрсе кайсан, алăкĕ хупăнса ларнă.

## XI.

### Уђитлĕпе вĕренекенĕ.

Çимуртен Ковен револђутсишĕн йурăхсăр ĕç тунине курнă. Хăҭ те мĕн пултăр та, çапах Ковен Вантейăра пăлхав пуçлакан ђи айăплă çынна ирĕке кăларса йанă. Револђутси саккунĕ тăрăх ăпа уншăн вĕлермелле пулнă. Çав револђутсин тӳрĕ çулĕнђен нисталла те пăрăнма йурамасҭ. Çавăнпа та Çимуртенăн хăйĕн йуратнă вĕренекенне вĕлермеллех. Хăҭ те мĕнле пулсан та, Çимуртенĕн çавна тăвасах пулаҭ.

Анђах вĕлерес умĕн Ковена кайса курма йураҭ. Унпа калаçма йураҭ: унпа калаçнинђе револђутсине хирĕç кайни çук. Çимуртен çын вĕт. Çимуртен Ковена йуратаҭ.

Çурçĕр тĕлнелле Çимуртен Ковен çывăрнă пӳлĕме кĕнĕ. Ун патне пырса пăхнă та, ађасем макăрнă ђухнехи пек ђăмăрĕсемпе куçĕсене хуплавă. Çапла тапранмасăр пĕр минут хушши пек тăнă. Унтан ђăркуçланса ларса çывраканăн аллине хуллен тытнă та, хăй тути патнелле илсе пынă. Халђ вăл сутйе пулман. Ахалђ, йуратакан çын пулнă.

Ковен куçне уçса йанă.

— Ах, есĕр, уђитлĕ!

— Епĕ санпа калçхи апат çиме килтĕм, тенĕ те Çимуртен, хăй вĕрентнĕ çын çумне улăм çине пырса ларнă.

Ковен çăкăр сăмсине вăтаран хуçнă та, çуррине Çимуртене тыттарнă, унтан шыв курки панă.

— Малтан есĕ ĕç, тенĕ Çимуртен.

Ковен пĕр çăвар анҫах сыпнă. Çимуртенĕ канма пĕлмесĕр ĕçнĕ. Вăл пит пăшăрханни калаçнă ҫух пĕрмай шыв ĕçнĕрен анҫах паллă пулнă.

— Уҫитлĕ, епĕ сире курма пит хавас, тенĕ Ковен.—Есĕр мана, пĕр есĕр анҫах краштанин туса йатăр. Есĕр мар пулин епĕ улпутах пулса йулмаллаҫҫĕ, карлĕк пулмаллаҫҫĕ, тенĕ.

Вара вĕсем калаçма тытăннă. Калаçма та мар, тупăшма. Кăнтăрла мĕн пулни çинҫен, ыран ир тата мĕн пуласси çинҫен ним те асăнман. Унта, сутра сутйепе сут умне тăратнă çын пулнă, кунта уҫитлĕпе хирĕç калакан вĕренекенĕ.

— Пурне те пур тĕлĕшрен те пĕр тан туни кирлĕ. пурин тĕлĕшĕнҫен тĕп-тӳрĕ саккун пулмалла, тенĕ Çимуртен.

— Ах. уҫитлĕ! тенĕ ăна хирĕç Ковен. — Апла пулсан, есĕр хăвăрăн респуплĕкре çын хăй çинҫен манса, урăх çынсемшĕн ырă ĕç тăвассине, çынна йуратассине мĕнле вырăн паратăр? Пурне пĕр тан выçеллĕ туни лайăх, илемлĕ туни тата лайăхрах, тенĕ.

— Есĕ пĕлĕт çынҫе вĕçсе çӳретĕн. Çĕр çине ан. Епĕр мĕн тума май килнине анҫах тăвасшăн, тенĕ Çимуртен.

— Епĕ каланине тума пулаť. Çыннăн йаланах йăвăр йапаласем çĕклесе çӳреме кирлĕ мар. Çынна сăнҫăрсем сĕтĕрсе çӳреме туман, çӳлтен вĕçсе çӳреме тунă. Епĕ пурин ҫĕрисене те танаштарса ҫунĕсене пĕр тăван тăвасшăн.

— Есĕ каллех тума пулманни çинҫен калатăн. Калаха: халҫ сана мĕн кирлĕ?

— Халҫ мĕн пур, çав.

— Апла пулсан, есĕ: халҫ мĕн пулса иртни пурте кирлĕ, тетни?

— Ара, тенӗ Ковен.—Мӗншӗн тесен хаљ ҫил-тӑвал. Тӑвӑл хӑй мӗн тӑвассине хут те хӑҫан та пӗлет. Револјутси тӑвӑлӗ ђир-ђӗре вӗҫтерсе йађӗ — Усалпа пӗрле вӑл хӑш ђух лайӑххине те вӗҫтерсе кайат пулӗ. Анђах урӑхла тумалли ҫук. Пурне те тӗппипех тасатмалла вӗт. Епӗ хаљхи вӑхӑтӑн хӑрушӑлӑхӗсем виттӗр киввинђен тасална ҫӗнӗ ђиркӳ куратӑп, тенӗ.

Ҫапла Ҫимуртенпе Ковен инҫетри параппан сассисем хӑйсене каласма ђариђђен каласса ларнӑ. Тӳттӳрӳт калани илтӗннӗ.

## XII.

### Пуҫ татни.

Турк самӑкӗ тӗлӗнђе, ҫӳлӗ ҫӗрте тӑвата тунката ҫине кӗпер пекки туса лартнӑ. Кӗперӗн пӗр вӗҫӗнђе тата икӗ йупа тӑратса лартнӑ, йупасем ҫине урлӑ кашта хунӑ. Кашта ҫинђен виҫ кӗтеслӗскер ҫакӑнса тӑнӑ. Ҫав виҫкӗтеслӗ йапала ирхи кӑвак пӗлӗт тӗлӗнђе хуран курӑннӑ. Кӗперӗн тепӗр вӗҫне пусма тӑратнӑ. Икӗ йупа хушшинђе, виҫ кӗтеслӗ йапала айӗнђе рамӑ пеккискер курӑннӑ. Ҫав рамӑ пеккискер ҫурмаран икӗ йенелле уйӑрӑлма пултарнӑ, вӗсем пӗрлешсе ларсан, вӑтам ҫын мӑйӗ сарлакшӗ ҫаврака шӑтӑк пулса тӑнӑ. Рамӑн ҫӳл йенђи ҫуррийӗ айалалла та, ҫӳлелле те шунӑ. Хаљ рамӗ уҫӑ пулнӑ. Виҫӗ кӗтеслӗ йапала ҫакӑнса тӑракан йупасем кутӗнђе хӑма курӑнса тӑнӑ. Хӑми ђуђђу хӑмисем пекех пулнӑ. Хӑмапа йунашар вӑрӑм карҫинккӑ ларнӑ, унтан малтарахра кӗпер вӗҫӗнђе тепӗр тӑвата кӗтеслӗ карҫинккӑ пулнӑ. Пурне те хӗрлӗ сӑрпа сӑрланӑ. Виҫӗ кӗтеслӗ тимӗр йапаласӑр пуҫне, ыттисене пурне те йӑвӑҫран тунӑ.

Вӑл килйоттинӑ пулнӑ.

Ҫапла айала пулнӑ Турк самӑкӗпе ӑна ҫӗннӗ килйоттинӑ пӗр-пӗрне хирӗҫ ним ђӗнмесӗр пӑхса тӑнӑ. Килйоттини ҫӗнтернӗ те, шеллессе пӗлмен.

Ашă çил вереск хунавĕсене хумхатнă; тул çутăлас умĕнхи тĕтрен йулашки татăкĕсем курăк çийĕпе шунă. шурăм пуç киле пуçланă.

Самăк патĕнҫе тăватă пин салтака вăрçа кайас пек тăратса тухнă. Вĕсем килйоттинăна виçĕ йенҫен хупăрласа тăнă. Çав салтаксем вăрçа кайас пек виçĕ шеренки килйоттинăна ҫĕрĕ çтена пекех картласа илнĕ. Хĕвел çÿлелле хăпарнă çемĕн килйоттинăн курăк çине ÿкнĕ мĕлки кĕскелсе пынă.

Пашңă тăррине сутйе сĕтелне куçарса пынă. Хĕвел пашңă тĕлнелле хăпарса, сĕтел хушшинҫе виçĕ тĕслĕ йалавсем айĕнҫе ларакан Çимуртен кĕлеткине çутатнă. Çимуртен аллисене хĕреслесе тытса ним тапранмасăр ларнă. Вăл малтанхи кунĕнҫи пекех краштăн телекаҫĕн хурмипе пулнă: виçĕ тĕслĕ коккарталлă шлеппе, айаккинҫе шашкă, тата пиççиххи хуппинҫе икĕ пистолет пулнă.

Пурте шăп тăнă. Салтакĕсем пăшалĕсене урисем çумĕнҫе тытса айалалла пăхса тăнă. Акă парапан сассисем илтĕнсе кайнă. Салтак реҫĕсем сирĕлнĕ; ҫĕрĕ карта ăшне пĕр упкăн пырса кĕнĕ те, вĕлермелли вырăн патнелле утнă.

Малтан хура параппансем курăнса кайнă; вĕсем хыççăн пăшалсене уснă кренатер ротти; унтан шантар своҫĕ; унтан Ковен. Шантарсен тепĕр своҫĕ хыçалтан пынă.

Ковен вăрçа кайакан хурмăпа пулнă, шашкăпа. Аллинҫе те, уринҫе те унăн сăнҫăр тавраш пулман. Вăл ирĕккĕн утса пынă. Вĕлермелли вырăн патне çитсен, вăл пашңă тăрнелле пăхса илнĕ, кĕпер çинелле хăпарнă ҫух вара Çимуртенĕн вилĕ пек шуралса кайнă пиҫĕ çинҫен куçне те илмен.

Кренатер роттин кăмантирĕ Ковен хыççăн хăпарнă. Ковен хăйĕн шашкине вĕçертсе илнĕ те,

ухвитсере пана; унтан калстухне вѐçертнѐ те. палаҫа пана. Вѐлермелли çынна çыхса лартмалла пулнӑ. Палаҫ кантра тытса ун патне утса пынӑ.

Авҫах салтаксем. хӑйсен çамрӑк камантирне çавӑнтах килйоттинӑ çѐççи айне хурасса кура: Каçарӑр! Каçарӑр! тесе кӑшкӑрса йанӑ. Çимуртен кӑшкӑрнисене итленѐ, анҫах ӑна тархасласа çавӑрма пулман.

Палаҫ ним тума пѐлмесѐр аптраса тӑнӑ.

Вара Çимуртэн:

— Ҫӑн сут пултӑр! тенѐ.

Палаҫ урӑх иккѐленсе тӑман.

Вӑл хӑйѐн кантрине тытнӑ.

— Тӑхтӑр ха, тенѐ ӑна Ковен.

Пашҫӑ йеннелле çавӑрӑнса вӑл уҫитлине аллипе сулнӑ та, унтан хӑйне çыхтарнӑ. Çыхса лартсан, вӑл палаҫне:

— Каçарӑр, тата тепѐр минут кѐтѐр-ха, тенѐ те:

— Респуплѐк сывӑ пултӑр! тесе кӑшкӑрса йанӑ.

Ӑна хӑма çине хунӑ, пуçне мӑй валли шӑтӑк ӑшне ҫикнѐ. Палаҫ ун ѐнси çинҫи çӳçне хуллен çӳлелле хӑпартнӑ, унтан прушин çине пуснӑ. Виçѐ кѐтеслѐ çѐçѐ вырӑнтан тапраннӑ та, шӑва пуçланӑ. малтан хуллен, унтан хыттантарах. Ковен пуçѐ хѐрлѐ корçинккӑ ӑшне кѐрсе те ӳкнѐ.

Çав вӑхӑтрах Çимуртен пиçиххи хушшинҫен пѐр пистолетне туртса кӑларнӑ та, хӑйне ҫѐрѐрсн тѐллесе персе йанӑ. Çӑварӑнҫен йун тапса тухнӑ. Вӑл вилсе кайнӑ.

---

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

Хакĕ 42 пус.